чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

49 /26455/ № Юн кун, 2014, пуш (март), 19 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Чăваш Ен Пуçлăхĕ те хутшăннă

***Пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Кремльте Крым Республики тата Севастополь хули Раççей Федерацийĕн тытăмне йышăнма ыйтнă май Раççей Президенчĕ Владимир Путин Патшалăх Думин депутачĕсен, Федераци Канашĕн членĕсен, Раççей регионĕсен ертӳçисен тата граждан обществин представителĕсен умĕнче тухса каланă çĕре хутшăннă.***

Раççей патшалăхĕн пуçлăхĕ Крым Республикинче пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче иртнĕ референдум пĕтĕмлетĕвĕсене юридици тата политика тĕлĕшĕнчен хакланă, Раççейĕн Федераци Пухăвне Раççей Федерацийĕн тытăмне çĕнĕ 2 субъекта – Крым Республикипе Севастополь хулине – йышăнасси çинчен документсен пакетне парассине пĕлтернĕ.

Раççей Президенчĕ тухса калаçнă хыççăн Раççей Федерацине Крым Республикине йышăнасси тата Раççей Федерацийĕнче çĕнĕ субъектсем йĕркелесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

## ЧР Патшалăх премине илме тăратнă

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи литературăпа искусство енĕпе Патшалăх премине парас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси ларăвĕ иртнĕ. Унта 2013 çулта литературăпа искусство енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх премине илме тăратнă ĕçсемпе хайлавсене пăхса тухнă.***

Конкурса пурĕ 4 ĕç тăратнă. Тĕплĕ сӳтсе явнă хыççăн комисси 2013 çулта литературăпа искусство енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх премине илмелли конкурса хутшăнма çак ĕçсемпе хайлавсене кĕртнĕ:

1. «Возрождение суваро-булгаро-чувашского ювелирного искусства» коллекци. Авторсен коллективĕ:

Владислав Владимирович Николаев, Пĕтĕм Раççейри «Раççей художниксен союзĕ» общество пултарулăх организацийĕн членĕ, пултарулăх ушкăнĕн ертӳçи; Геннадий Андреевич Максимов, Чăваш Республикин Культура министерствин «Чăваш наци музейĕ» бюджет учрежденийĕн реставраци мастерскойĕсен заведующийĕ, пултарулăх ушкăнĕн членĕ; Алексей Владиславович Николаев, Пĕтĕм Раççейри «Раççей художниксен союзĕ» общество организацийĕн членĕ, пултарулăх ушкăнĕн членĕ.

Пĕтĕм Раççейри «Раççей художниксен союзĕ» общество пултарулăх организацийĕн регион уйрăмĕ тăратнă.

2. «Андриян Николаев: орбиты космические и земные» документ повеçĕ. «Чăваш Енĕн паллă çыннисем» биографи ярăмĕ. Авторĕ – Валентина Андреевна Иванова, ИТАР-ТАСС корреспонденчĕ.

Чăваш Республикин Информаци политикин министерствин «Чăваш кĕнеке издательстви» патшалăх унитари предприятийĕ тăратнă.

3. А.Гринăн суйласа илнĕ хайлавĕсен литературăпа илемлĕ куçарăвĕ 5 томпа /2010-2012 çç./. Чăвашла куçару авторĕ – Алексей Петрович Леонтьев, Чăваш Республикин Профессионал писательсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикин Информаци политикин министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» автономи учрежденийĕн директорĕ-тĕп редакторĕ.

Чăваш Республикин Профессионал писательсен союзĕ тăратнă.

Комисси пултарулăх тата общество организацийĕсене, культура учрежденийĕсене, культурăпа искусство ĕçченĕсене, республикăра пурăнакансене тăратнă ĕçсемпе хайлавсене уççăн сӳтсе явма чĕнет.

Хăвăрăн шухăшăрсене, сӳтсе явнисене, асăрхаттарусемпе сĕнӳсене комиссие 2014 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕччен çак адреспа ярса пама ыйтатпăр: 428004, Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт, 412-мĕш пӳлĕм, ыйтса пĕлмелли телефон: 64-20-68 е e-mail: kult1@cap.ru.

Тĕплĕнрех пĕлме Комисси секретарĕ Альбина Ивановна Алексеева патне 62-09-66 номерпе шăнкăравламалла.

## Самана таппинчен юлмалла мар!

Чăваш Енре Культура çулталăкĕ

***Пĕтĕм тытăмри ĕç-хĕле йăнăçлă татса парасси кадр ыйтăвĕпе çыхăннă. Пултаруллă, квалификациллĕ специалистăн ĕç пахалăхĕ те пысăк, ăсхакăлĕ те пуян.***

Сăмахăма культура отраслĕпе çыхăнтарам-ха. Çак хутлăх вышкайсăр анлă, харăсах пурин пирки калаçма çеç мар, асăнса тухма та йывăр. Çавăнпа та хăш-пĕр самант пирки çеç чарăнса тăрăпăр.

Самана пĕр тăхтамсăр малалла талпăнать, çĕнĕ технологисем пурнăçа кĕреççĕ, Интернет хуçа пулас тесе «пуç» çĕклет. Вăхăт çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Яваплăх каллех ăста, лайăх пĕлӳллĕ, пысăк квалификациллĕ специалист çине тиенет. Çĕннине кам хăвăрт ăша хывать? Çамрăкки, çут тĕнчене килсенех çав «хуранра вĕреме» пуçлани. Ертӳçĕсен вăл е ку ĕçе шăпах çавнашкаллисене явăçтарма тăрăшмалла та.




Республикăра иртнĕ çул культурăпа кану учрежденийĕсем 738 пулнă, библиотекăсем – 539. Унта ĕçлекенсенчен пысăк пайĕ, шел те, аслă ăрурисем. Сăмахран, клубсемпе культура çурчĕсенчи специалистсенчен 9,3 проценчĕ çеç 30 çула çитмен, библиотекарьсенчен – 12,4 проценчĕ, ачасен искусство шкулĕсенче ĕçлекенсенчен – 33,3 проценчĕ. Професси тĕлĕшĕнчен ятарлă пĕлӳ илнисен шучĕ те тивĕçтермест: культурăпа кану учрежденийĕсенче вĕсем пурĕ те 20,5 процент çеç. Çавăнпа чылай клубра такам та – агроном та, медработник та, экономист та тата ытти те – ĕçлет. Юрĕ, халăх пултарулăх шайĕнче унашкаллипе те килĕшме пулĕ, анчах профессионал коллективсенче ку – чăнчăн аптриш.

Ачасен искусство шкулĕсенчи лару-тăру пирки чарăнса тăрар-ха. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх – 2013 çулта ачасен музыка тата искусство шкулĕсенче çапса каламалли инструментсемпе калама пурĕ те 18 ача çеç /0,1 процент/ вĕреннĕ. Мĕншĕн сахал тетĕр-и? Асăннă специальноçпа вĕрентекенсем çукран. Апла малашне ку енĕпе кадрсем те пулмĕç. Вĕрсе каламалли инструментсемпе вĕренекенсен хушшинче /вĕсем пурĕ 255 ача/ фагот, валторн енĕпе пĕр ача та пĕлӳ илмест. Хĕлĕхлĕ инструментсемпе те пурĕ 1,6 процент çеç вĕренет, яллă вырăнта вара – пачах çук. Çакна палăртмалла: республикăри ачасен искусство шкулĕсенче академи пĕлтерĕшлĕ специальноçсемпе вĕренекенсен шучĕ 2013 çулта, 2010 çулпа танлаштарсан, икĕ хут чакнă. Апла малашне симфонин, вĕрсе каламалли тата камерлă оркестрсен вуçех пĕтес хăрушлăх сиксе тухать.

Паллах, ЧР Культура министерстви çак лару-тăрура хăйĕнчен мĕн килнине тăвать-ха. Çăмăл мар ĕç-пуç пирки республика ертӳлĕхне пĕлтернĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ М.В.Игнатьев тивĕçлĕ йышăну тунă та: республикăн кăçалхи бюджетне ачасен музыка тата искусство шкулĕсем валли музыка инструменчĕсем туянма 10 млн тенкĕ хывса хăварнă.

Инструментсем туянма пулĕха, унпа калама вĕрентекенсене вара? Ку енĕпе те пуçа ватмалли сахал мар-мĕн. Тĕп хулари Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче 2013-2014 çулсенчи вĕренӳ çулĕнче оркестрти хĕлĕхлĕ инструментсем енĕпе республика районĕсенчен пĕр студент та пĕлӳ илмест, вĕрсе тата çапса каламалли инструментсемпе – пĕр çамрăк /Вăрмар районĕнчен/. Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнче те инструментпа калама вĕренес текенсем районсенчен çукпа пĕрех /икĕ çамрăк çеç/.

Тĕрĕссипе, пуррине те упрама пĕлместпĕр темелле. Сăмахăм пĕлӳ илнĕ çамрăк специалистсене ĕçе вырнаçтарасси пирки. Акă иртнĕ çул Чăваш Енри культурăпа искусство институтĕнчен тата вăтам пĕлӳ паракан ятарлă висĕ училищĕрен 181 специалист вĕренсе тухнă. Вĕсенчен пурĕ те 95-ĕшĕ çеç ĕçе вырнаçнă. 70-ĕшĕ пĕлĕве малалла тăсас тенĕ /Мускава е ытти хулана кайнисем каялла таврăнасси иккĕленӳллĕ/, 16-шĕн шăпи паллă мар. Тĕрĕссипе вара патшалăх кашни студентшăн укçа-тенкĕ сахал мар тăкаклать. Музучилищĕре вĕренекеншĕн пĕлтĕр 227,4 пин тенкĕ кайнă, культура институтĕнчи студентшăн – 103,6 пин тенкĕ. Шухăшламалăх пур: ытти регион е отрасль валли хатĕрлетпĕр мар-и тăван культурăшăн ылтăн пек хаклă кадрсене?

Пăтăрмахлă лару-тăруран тухма пулать-ши? Тăрăшсан, çине тăрса ĕçлесен – ахăртнех. Патшалăх нухратне перекетлеме те, отрасль валли специалистсене кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме те. Мĕн тумалла-ха? Культура учрежденийĕсен ертӳçисемпе вĕренӳ заведенийĕсен çыхăну тытса ĕçлемелле. Урăхла каласан – специалистсене саккаспа хатĕрлемелле. Музыка е ӳнер училищи, е культура институчĕ пирки сăмах пырать-и – унти ятарлă çынсен районсемпе çыхăнса вĕсене мĕнле специалистсем кирлипе кăсăкланмалла, вырăна тухса çӳремелле, заявкăсем йышăнмалла. Тĕллевлĕ ĕçлесен çеç усси пулĕ.

Унран та ытларах, аталану тапхăрĕ хăй еккипе «тăнкăртатса» пыма мар, ăслăлăх тĕлĕшпе те пĕр чĕлхе тупма, пĕр «тĕвĕре» пулма хистет. Прогноз тата мониторинг тĕпчевĕсем пĕлтерĕшлĕ пулмалла. Ку шухăш ЧР Культура министерствин ĕçченĕсене те канăççăрлантарать. Тен, ăслăлăх-тĕпчев центрĕ йĕркелемелле? Вăл ăçта пулсан меллĕрех? Культурăпа искусство институчĕ çумĕнче вырăнлă пек. Унти асăннă центрăн тĕп тивĕçĕ çакă пулĕччĕ: отрасльте кирлĕ профессипе специальнăçа хатĕрлессине нумай çул валли палăртасси.

■ **Надежда СМИРНОВА**

## Куславккара та – ЧНК уйрăмĕ

***Район администрацийĕн канашлу залне çав кун тăван халăхăмăрăн шăпишĕн пăшăрханакансем, йăли-йĕркине аталантарассишĕн, чĕлхине, юрри-кĕввине упраса хăварассишĕн тăрăшакансем пухăнчĕç.***

Ларăва Чăваш Республикинчи муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн членĕ Юрий Зорин, районти «Ялав» хаçатăн тĕп редакторĕ Валентин Константинов, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, вĕренӳ учрежденийĕсен ертӳçисемпе ачасене пĕлӳ паракансем, культура ĕçченĕсем хастар хутшăнчĕç.

ЧНК Куславккари йĕркелӳ комитечĕ районта конгресс уйрăмне, правлени йышне тĕрлĕ сферăра вăй хуракан 12 çынран, ертӳçипе çыруçине – райхаçатăн тĕп редакторĕ Валентин Константинов тата районти паллă фермер Василий Семенов – çирĕплетрĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Валентин Колумб ЧНК хастарĕсене пархатарлă ĕçре ăнтăлу сунчĕ, влаç тытăмĕ енчен çителĕклĕ пулăшу парасса шантарчĕ.

**Ю.СТЕПАНОВ.**

## Диплома тивĕçнĕ

***Чăваш Ен каччи вокалистсен Пĕтĕм тĕнчери «Сандугач-Шăпчăк» конкурсĕнчен дипломпа таврăннă.***

Опера юрăçисен пултарулăхне аталантарас тата вĕсен професси ăсталăхне ӳстерес тĕллевпе пуçарнă конкурс Хусан патшалăх культурăпа ӳнер университетĕнче иртнĕ. Ăна Тутар патшалăх оперăпа балет театрĕн солистки Винера Ганеева пулăшнипе йĕркеленĕ. Унта çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 50 ытла çамрăк артист хутшăннă. Вĕсен йышĕнче Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕн вокал уйрăмĕн студенчĕ Максим Карсаков та пулнă. ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Агриппина Иванова класĕнче вĕренекен каччă жюри членĕсене хăйĕн пултарулăхĕпе тыткăнланă, ăна II степень дипломпа чысланă.

**О.МАСЛОВ.**

## «Архив йыхравлать»

***Çакнашкал ятпа ЧР Патшалăх истори архивĕнче семинар иртнĕ. Унта Улатăр, Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар хулисенчи, Куславкка, Красноармейски, Муркаш, Çĕрпӳ тата Етĕрне районĕсенчи вĕренекенсемпе педагогсем хутшăннă.***

Пухăннисене архив директорĕ Галина Ертмакова саламланă, учреждени ĕçĕ-хĕлĕ тата республикăри архив тытăмĕ çинчен каласа кăтартнă. Архив ĕçченĕсем ачасене документсене упраса хăварас, вĕсене реставрацилес вăрттăнлăхсене те уçса панă. Семинара хутшăннисем сайра тĕл пулакан документсемпе паллашнă, пӳлĕмсене кĕрсе курнă, тĕрлĕ ыйтупа кăсăкланнă. Мероприяти вăхăтĕнче хăнасене те сăмах панă: Çĕнĕ Шупашкарти 16-мĕш вăтам шкул учителĕ Светлана Прыткова архивçăсене аваллăха упранăшăн тав тунă.

**Е.АНДРЕЕВ.**


## «Хыпар» çырăнăр – хыпарлă пулăр!




*Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли малтанхи хакпа –*

**460 тенкĕ те 86 пус –**

*çырăнса ĕлкĕрĕр.*

*Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ӳсет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар-шăмат куна»*

**218 тенкĕ те 22 пуспа**

*çырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлетĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.*


Ыйтăм

## Крым йышăнăвĕ – ирĕклĕ, тĕрĕс утăм

***Раççейре, çав шутра – Чăваш Республикинче те, Украинăн çĕнĕ влаçĕн ĕç-хĕлне, унти ультранационалистсене сивлесе, Крым халăхĕпе пĕрле пулнине палăртса йышлă халăхлă митингсем иртеççĕ. «Эпир – миршĕн! Крымшăн!», «Раççейпе Украина халăхĕ – пĕрлĕхлĕ», «Хамăрăннисене пăрахмастпăр!» – шухăш-чăнлав пĕрлештерет паян пире. Эпир шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлнĕ çынсем те çакнах çирĕплетрĕç.***

**Александр ЯКОВЛЕВ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ /Шупашкар хули/:**

– Паян мана Раççейпе Украина хушшинчи хутшăну, çивĕчленнĕ лару-тăру питех те канăççăрлантарать. Мĕн ĕмĕртен эпир пĕр çемьери пек тăванлăх туйăмне тĕпе хурса пурăннă. Эпир славян халăхĕ вĕт. Мĕн харкашмалли, пайламалли пур пирĕн? Çак хирĕç тăру ырри патне илсе пыманнине пирĕнтен кашниех ăнланать. Украинăн сылтăм радикалĕсенчен тем те кĕтме пулĕ. Вĕсем нацизм сĕрĕмĕпе анранă. Хĕç-пăшалпа хăмсараççĕ. Вăрçă-харçă пуçланас хăрушлăха пĕтерме пĕтĕм халăхăн – Раççейĕн, Украинăн та, ыттисен те – пĕрле тăрăшмалла.

Чăваш Ен те Крымпа тачă çыхăннă. Сăмахран, манăн шăллăм Андрей Яковлев капитан-лейтенант Севастопольте, Хура тинĕс флотĕнче хĕсметре тăнă. Хăй вăхăтĕнче ăна Украинăн çар флотне куçма сĕннĕ. Шăллăм сĕнĕве йышăнман: ăна çар çынни пĕр хут кăна присяга панипе сăлтавланă. Çар тумне ирĕксĕр хывсан Бахчисарайри риэлтор компанийĕнче тăрăшать. Икĕ халăх хушшинчи тăнăç пурнăçа нимĕн те çитмĕ. Крым Раççей йышне кĕни – пурнăçри чăн факт. Кăмăла каять-и вăл е çук-и – ăна текех улăштараймăн.

**Клавдия АНДРЕЕВА, педагогика ĕçĕн ветеранĕ /Йĕпреç районĕ, Вырăс Тимеш ялĕ/:**

– Пуш уйăхне кĕнĕренпех Крымран килекен хыпарсемпе кăсăкланатăп. Симферопольте манăн вăталăх хĕрĕм пурăнать. Çĕнĕ çул умĕн вăл тăван тăрăха килсе кайрĕ, çавăн чухне Украина çĕр-шывĕнче лару-тăру çивĕчленсе пыни çинчен пĕлтерчĕ. Паян вара манăн чун-чĕре лăпкă: Крым çур утравĕ çинче пурăнакансем хăйсен тахçанхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕшĕн – каллех Раççее таврăнма шăпа тухнăшăн ача пекех хĕпĕртетĕп. Вĕсем питех те тĕрĕс утăм турĕç. Ӳлĕмрен хăйсене пирĕн çĕр-шывăн саккунлă субъекчĕн тивĕçлĕ çыннисем тесе йышăнĕç, Украина националисчĕсен мăшкăлĕнчен хăтăлса тухнă хыççăн тăван чĕлхепе мăнаçланса та хавхаланса калаçĕç. Крымри референдум пĕтĕмлетĕвĕсене пĕлсенех хĕрĕме карас телефонĕпе шăнкăравласа саламларăм. Халĕ пĕр-пĕрин патне час-часах кайса çӳреме тытăнăпăр, çавна май пирĕн çыхăнусем çирĕпленсех пырĕç.

**Алевтина КУЗНЕЦОВА, педагог /Улатăр районĕ, Восход поселокĕ/:**

– Крым çакăн пек çул-йĕр суйласа илесси халăх сасăлавне ирттеричченех паллăччĕ. Референдума хутшăннă çынсенчен ытларахăшĕ Раççейпе пĕрле пулма кăмăл тăвасса шаннă та, ĕненнĕ те эпĕ. Çак утăма тума нимĕнле хирĕçле вăй та чăрмантараймарĕ вĕсене. Халĕ ĕнер кăна хăйсене мĕскĕннĕн курса тăнă çынсен сăн-питĕнче лăпкăлăх палăрать. Вĕсем паянтан Раççей çĕршывĕн ырлăхĕпе тĕрекне ӳстерессишĕн пирĕнпе пĕрле, пĕр тĕллевлĕ çемьере тăрăшма тытăнĕç. Украина халăх поэчĕн Павло Тычинăн «Пĕр кил-йыш туйăмĕ» ятлă сăвви пур, унта çырса кăтартнă тăванлăхпа туслăх кĕреки малашне икĕ халăха тата та таччăнрах пĕрлештерĕ. Çав шанăç кăмăла çĕклет, ыранхи кун телей шевлипе çуталса килесси никама та иккĕлентермест.

**Иван САЛАНДАЕВ, Чăваш наци конгресĕн Шăмăршă районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи:**

– Ырă хыпар чуна ăшăтать. Хамăр районти пин-пин çын пекех эпĕ те Крым çур утравĕнче пурăнакансем Раççейпе пĕрлешес ыйтупа референдум ирттернине, унти халăхăн çав тери пысăк пайĕ Раççей йышне кĕрессишĕн сасăланине хавхаланса йышăнтăм.

Крым – пирĕнпе! Урăхла епле-ха? Çак çур утрав маларах та пирĕн пулнă, Н.Хрущевăн ăссăрла политикине пула çеç тăвансенчен уйрăлтăмăр. Тĕрĕслĕх çĕнтермеллех! Пĕтĕм халăх референдумĕ çакна яр уççăн кăтартса пачĕ.

Эпĕ Крым çур утравĕнче икĕ хутчен те пулнă, унти курортсем ĕмĕр асра юлнă. Пурнăç йĕркеленсе кайсан малашне те çак юмахри пек илемлĕ вырăнсенче пулса курасчĕ-ха. Çакна çирĕп ĕненетĕп!

Крым çур утравĕнче чăвашсем те – эпĕ лайăх паллакан çынсем – пурăнаççĕ. Вĕсене те эпĕ референдум иртнĕ ятпа чĕререн саламлатăп. Пĕрлĕхре – вăй, Раççейпе пĕр çемьере пурăнса эпир халăхсен хушшинчи туслăха тата та çирĕплетĕпĕр.

**Николай ПАНТЕЛЕЙМОНОВ, Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Украинăра хăй вăхăтĕнче тĕп тăвайман Бандера ушкăнĕн мăнукĕсем халĕ пуç çĕклесе тăнăçлăхра аталанакан патшалăхăн нумай нациллĕ халăхне йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкерчĕç. Майдан пуçтахĕсен айăпĕпе юн та тăкăнчĕ. Океан леш енчи «тетесем» Яценюк, Тягнибок, Ярош, Кличко тата çавăн пек шухăшкăмăллă çынсен аллипе кăвар туртнине ахаль çын та ăнланать. Крым референдумĕ кунти халăх такамсен умĕнче мĕскĕннĕн пуç пĕксе тăма килĕшменнине, хăйĕн шăпине татса пама тăрăшнине уççăн кăтартса пачĕ. Çакăнпа килĕшмесĕр тăракансем урччăр-туллашччăр, пур пĕр вĕсем шухăшланă пек пулас çук. Истори хăех кам тĕрĕс пулнине кăтартрĕ, пурне те хăй вырăнне лартрĕ.

Политика лару-тăрăвĕ тăнăççăр çĕр-шывра пурăнма, паллах, çав тери йывăр. Крым Автономийĕ Раççей йышне субъект шучĕпе кĕме йышăннине пирĕн ял тăрăхĕнчи çынсем пысăк хавхаланупа, ырласа кĕтсе илчĕç. Çитет вĕсене унта асапланса пурăнма! Ăссăр политиксен йăнăшне вăхăт хăй тӳрлетрĕ: яланах Раççей çĕрĕ пулнă Крым унăн йышнех таврăнчĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ, Юрий СТЕПАНОВ ыйтса пĕлнĕ**

**Реклама менеджерĕ кирлĕ**

**«Хыпар» Издательство çурчĕ реклама менеджерне ĕçе илет: Тел.: 56-00-67, 28-83-70.**

## Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 8 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2, каçхине 13 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 739 мм, сывлăшри нӳрĕк 58 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 6 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, юр çукалать. Çил тухăçран çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3, каçхине 7 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 740 мм, сывлăшри нӳрĕк 83 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 10 минут.**

*Аталану çулĕпе*

# Ӳсĕм çăл кусĕ – хамăртах



● *Николай Ильбеев.*

Канашри ăратлă кайăк-кĕшĕк завочĕн финанс кăтартăвĕсемпе савăнса паллашрăм. Пĕлтĕрхи çитĕнӳсем 2012 çулхинчен курăмлăрах. Чăх-чĕп аш-какайĕ туса илесси 75,3% ӳснĕ. Чĕпĕсен ӳт хушаслăхĕ те, чăх йышĕ те пысăкланнă. Инкубаторпа мĕн пурĕ 280,1 пин /2012 ç. – 176,4 пин/ чĕпĕ кăларнă. Ăна халăха 63,6% ытларах сутнă. Производствăра вăй хуракансен вăтам шалăвĕ 21% хăпарнă.

– Ӳсĕм çăл куçне хамăртах шырамалла. Халăх хастар пирĕн, – терĕ Николай Ильбеев гендиректор. – Хăйсене кунта килĕшет пулас та рабочисем ĕçе вырнаçсан тивĕçлĕ канăва тухичченех вăй хураççĕ. Черновсем, Никитинсем, Дмитриевсем заводра çемйипех. Ытларах Чакаç, Кармами, Вырăскас Пикших ялĕсенчен çӳреççĕ. Мĕн пĕчĕкрен тĕрлĕ ĕçпе пиçĕхсе çитĕннĕрен нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ.

Коллективра 169 çын. Сезон вăхăтĕнче – чăхсене куçарнă, витесене тасатнă чухне – ытларах. Кăмăл пуррисене пĕр е икĕ эрнелĕхе йышăнатпăр.

Заводăн Йĕпреç районĕнчи Хурамалта, Елчĕк енри Елчĕкре филиалсем пур. Вĕсене Раиса Абрамовăпа Любовь Шадрикова ертсе пыраççĕ. «Пĕлтĕр Раиса Петровнăпа Любовь Алексеевна производствăра нумай çул тӳрĕ кăмăлпа та тăрăшса вăй хунăшăн «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçрĕç, – терĕ Николай Викторович. – Эпир уйрăмсене кашни кунах çитейместпĕр. Тепĕр тесен ку кирлех те мар. Иккĕшĕ те питĕ шанчăклă, профессионалсем. Хурамал инçе мар, кайса килме пултаратăр».

Çăмăл автомашина пире çур сехетрен кирлĕ çĕре илсе çитерчĕ. Раиса Петровнăпа ял тăрăхĕн администрацийĕнче тĕл пултăмăр. Филиал, коллектив ĕç-хĕлĕ çинчен чылаййччен калаçрăмăр.

– Ача чухне чăх-чĕп, хуркăвакал, шултра выльăх та картиш тулли пулнине ас тăватăп. 4 ывăл та пĕр хĕр çитĕннĕ эпир. Эпĕ – иккĕмĕш ача. Аслисем колхозра ир пуçласа каçченех. Манăн кĕçĕннисене те, выльăхчĕрлĕхе те пăхмалла. Аннене пулăшма фермăна та çитмелле. Çавăнпах ветеринар профессине кăмăлларăм пулĕ, – аса илет иртнĕ кунсене Раиса Петровна.



● *Раиса Абрамова.*

Çав вăхăтрах Р.Абрамова тепĕр вăрттăнлăх уçрĕ: «Ялта Вăрнарти совхоз-техникум хыççăн килнĕ çамрăк хĕр ветеринарта ĕçлетчĕ. Ун çине питĕ ăмсанса пăхаттăм, манăн ун пек пулас, выльăхсене чиртен сыватас килетчĕ. 8 класс хыççăн Вăрнарти совхоз-техникума кайса кĕтĕм».

Диплом илсен çамрăк специалиста Йĕпреç районĕнчи Хурамалти ветучастока ĕçлеме янă, 3 çул иртсен Канашри чăх-чĕп фабрикин филиалне ветфельдшера куçарнă. Кунтах вăл телейне тупнă, управляющире ĕçленĕ Владимир Николаевич зоотехникпа çемье çавăрнă.

Специализаципе килĕшӳллĕн Канашра – чăх, Елчĕкре – кăвакал, Йĕпреçре хур çитĕнтереççĕ. 4 вите, кашнинче пин çурă ытларах хур тытаççĕ.

Уйрăмра 18 çын вăй хурать, пурте Хурамалтан. Пĕр-пĕрне ăнланаççĕ, йывăр вăхăтра пулăшаççĕ.

Владимир Николаевич вăхăтсăр çĕре кĕрсен Раиса Петровна мăшăрĕ вырăнне юлнă. Р.Абрамова кунта вăй хума тытăннăранпа ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче 34 çул çитет, вăл шутран 12 çул управляющи тивĕçне пурнăçлать.

– Пенси ӳсĕмне çитрĕм пулин те кунтан пăрахса каяс килмест, – тет Раиса Петровна. – Патшалăх ĕçĕме пысăка хурса хаклани савăнтарать, татах тăрăшас килет.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

**Завод пуш уйăхĕн 20-мĕшĕ хыççăн пĕр талăкри чĕпĕсенчен пуçласа 4 уйăхри чăхсем таранах халăха сутать. Ака уйăхĕнче – хур, кăвакал çăмартисене тата чĕпписене.**

**Мăн кун валли те чăх çăмарти туянма май пур, лавккаринчен 20-30% йӳнĕрех. Николай Викторович Ильбеев гендиректорпа 8-937-950-21-04, Валерий Иванович Яковлев тĕп зоотехникпа 8-937-950-21-00 номерсемпе çыхăнма пултаратăр. Ĕçе те шăнкăравлама юрать: 2-02-41, 2-02-42, 2-02-87. Канашăн кочĕ: 8-35-33.**

*Реклама*

*Налук*

# Деклараци кĕтет инспекци

***Налук органĕсенчи Уçă алăксен кунĕсем йăлана кĕчĕç темелле. Пĕтĕм Раççейре йĕркелекенскерсем кăçал виççĕмĕш хут иртрĕç. Пуш уйăхĕн 14-15-мĕшĕсенче республикăри налук инспекцийĕсенче халăх чăннипех йышлă пулчĕ. Сăмах май, кăçалхи акцин уйрăмлăхĕ те пур – ака уйăхĕн 11-12-мĕшĕсенче те Уçă алăксен кунĕсем пулаççĕ.***

Федерацин налук службин Шупашкарти инспекцийĕ. 11 сехет. Налук тӳлекенсене йышăнма уйăрнă ятарлă залра çын нумай. Пай пуçлăхĕ Светлана Терентьева пĕлтернĕ тăрăх – кăнтăрла та çитмен-ха, анчах çынсенчен 177 деклараци йышăнма та ĕлкĕрнĕ. «Официаллă» ĕç кунĕ 9 сехетре пуçланать, анчах çынсем 8 сехет тĕлнех килме пуçланă та – кĕттерес темен, алăксене маларах уçма тивнĕ. Пирвайхи клиента парне те панă.

Деклараци кампанийĕ пырать вĕт – вăл ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче вĕçленет. Камăн саккунпа килĕшӳллĕн тупăшсем çинчен отчет тумалла – вĕсене йышăнаççĕ. Нумайăшĕ «вычет» илесшĕн – вĕсем те килеççĕ. Малтанхисен ака уйăхĕ вĕçлениччен деклараци парса ĕлкĕрмелле, иккĕмĕшсем вара декларацие çулталăк тăршшĕпех пама пултараççĕ. Çавна май вĕсемшĕн ку ĕçе çулла туни, тен, аванрах та пуль – ун чух инспекцисенче çын сахал, черет кĕтме тивмĕ. Анчах тепĕр самант та пурçке: хваттер туяннипе, медпулăшу илнипе, вĕренӳпе çыхăннă тăкаксене налук хумалли виçерен кăларттарса «вычет» илмешкĕн декларацие мĕн чухлĕ маларах паратăн – тӳлеве те çавăн чухлĕ маларах илетĕн. Палăртса хăварар: йĕркепе килĕшӳллĕн налукçăсен укçана деклараци йышăннă хыççăн 4 уйăхран кая юлмасăр тавăрса памалла, Шупашкарти инспекци вара ун чухлĕ кĕттермест – вăтамран уйăх çурă иртет.

Уçă алăксен кунне хатĕрленнĕ май налукçăсем хăйсен ĕç режимне кăна улăштарман, клиентсене йышăнакан ĕçченсен шутне те пысăклатнă.



Çавна май килекенсен нумай кĕтме тивмест. Налуксем тĕлĕшпе тĕрлĕ канаш параççĕ, декларацие çырса тултарма пулăшаççĕ, онлайн-сервиссемпе усă курмалли майсем пур – меллĕ. Ытти чух налук тӳлекенĕн инспектор патне хатĕр деклараципе килмелле, паян вара авă кирлĕ документсене кăтартса консультантсемпе пĕрле деклараци хатĕрлеççĕ. Тепĕр тесен аслă инспектор Фруза Коракова çынсен налук тӳлессипе çыхăннă «хут пĕлменлĕхĕ» чакса пынине палăртать. Çапла, çыншăн декларацие хăй тĕллĕн çырса тултарасси пирвайхи хутĕнче йывăр – пулăшу кирлĕ, иккĕмĕш-виççĕмĕш хучĕсенче вара хăнăху пур та – хăйсемех вăй çитереççĕ.

Инспекцисенче черетсем ан пулччăр тесе налукçăсем çак тапхăрта декларацисене предприятисенче йышăнассине те йĕркеленĕ. Ĕçлекен çыннăн вăхăт çукрах вĕт – капла чăннипех меллĕ. Паллах, пĕчĕк предприятисенех çитеймеççĕ, пысăккисенче вара – тархасшăн. Сăмахран, «Элара» заводра ку ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Инспектор патне хăш цех хăш вăхăтра пырассине малтанах палăртаççĕ, черете çырăнаççĕ – никам та кĕтсе тăмасть.

Налукçăсем хаçат урлă асăрхаттарма та ыйтрĕç: çулленех деклараци памалли вăхăт вĕçленсе пынă чухне халăх йышлă килет. Темшĕн-çке эпир вăл е ку ĕçе яланах юлашки кунсене хăваратпăр. Çавна май черетсем капланаççĕ – çынсем хăйсемех кăмăлсăр. Пĕлтĕр пуш уйăхĕн 14-мĕшĕ тĕлне Шупашкарти инспекци 15 пин деклараци йышăнма ĕлкĕрнĕ. Кăçал çак кун тĕлне ку йыш хушăннă – 16 пин ытла. Анчах çакă та деклараци пама тивĕççисен 20% кăна-ха. Акă мĕншĕн инспекцие каяссине ака уйăхĕн вĕçне хăварас марччĕ, тивĕçе хальтерех пурнăçлани хамăршăнах лайăх. Пушшех – Уçă алăксен кунĕсем татах та пулассине кура. Ака уйăхĕн 11-12-мĕшĕсенчи акципе те усă курса юлăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Патшалăх пулăшăвĕ*

# Амăшĕсене – хӳтлĕх

***Иртнĕ çул вĕçĕнче йышăннă пенсипе çыхăннă çĕнĕ саккунсенче амăшлăхпа ачалăха хӳтĕлес енĕпе витĕмлĕ улшăнусем палăртнă. Паянхи кăларăмра вĕсемпе Раççей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн ертӳçи Роза Алексеевна Кондратьева паллаштарать.***

**– Роза Алексеевна, амăшĕсене хӳтĕлесси пирки сăмах пуçариччен пенси формули еплерех улшăннине уçăмлатмăпăр-и?**

– Çĕнĕ саккунсем тăрăх страховани пенсине тивĕçмешкĕн вăй питти тапхăрта 15 çултан кая мар стаж тата 30 коэффициентран сахал мар пухмалла. Урăхла каласан çĕнĕ условисенче стаж тăсăмĕн тата официаллă йĕркепе шалу илсе тăнин пĕлтерĕшĕ ӳсет. Тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕме илес тĕк асăннă кăтарту халĕччении пекех юлать.

Саккунсенче палăртнă условисене пурнăçа майĕпен кĕртеççĕ: 2015 çултан тытăнса 10 çул иртиччен куçăм тапхăрĕ вăйра тăрать. Стажа 6 çултан пуçласа çуллен пĕршер çулталăк ӳстереççĕ. Пенсин харпăр хăй коэффициенчĕн чи пĕчĕк виçине 2015 çулта çирĕплетнĕ 6,6-ран çуллен 2,4 хăпартаççĕ. Асăннă кăтартăва палăртмашкăн ĕçпе тивĕçтерекен уйрăм çыншăн тӳленĕ суммăна чи пысăк шалуран /халĕ çулталăкра – 624 пин тенкĕ/ куçаракан взнос виçи çине пайлаççĕ тата пысăклатнă коэффициент çине хутлаççĕ. Сăмахран, 2015 çулшăн пенси коэффициенчĕн хакне патшалăх 64,1 тенкĕпе танлаштарнă. Çапла вара стаж 30 çул пулсан тата çак тапхăрта 300 коэффициент ĕçлесе илме пултарсан страховани пенсийĕ 19 пин тенкĕрен иртмелле.

**– Çапах та амăшĕсем пысăк коэффициента тивĕçесси иккĕлентерет: ача çуратнипе, ăна пăхнипе хĕрарăмăн производствăран чылай вăхăтлăх уйрăлма тивет вĕт…**

– Çĕнĕ саккунсем тăрăх социаллă пĕлтерĕшлĕ тапхăрсене страховани стажне кĕртессине сыхласа хăварнă, çав шутра ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхнине те. Асăннă вăхăтшăн пенсин çулталăкри уйрăм коэффициенчĕсене шутласа параççĕ. Вĕсем мĕн чухлĕ пухăнасси ывăл-хĕр йышĕнчен килет: иккĕмĕшĕшĕн – 2 хут нумайрах, виççĕмĕшпе тăваттăмĕшĕшĕн – 3 хут. Йĕкĕрешсене /е харăсах çуралнă виçĕ ачана/ пăхнă чухне коэффициентсене пĕрле хушаççĕ. Çапла вара патшалăх амăшлăха хӳтĕлессине вăйлатнă. Çакăн усси сисĕмлĕ: тĕслĕхрен, тăватă ача çуратса вĕсене пăхмашкăн илнĕ 6 çуллăх отпускшăн хĕрарăма 24 коэффициента яхăн параççĕ. Виççĕмĕш тата тăваттăмĕш пепкисемпе ларнă тапхăршăн вара вĕсем пысăклатнă виçеллисем пулаççĕ /28 пин тенкĕпе танлашакан шалу шайĕнчисем/.

**– Çĕнĕлĕх 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче вăй илессе асăнтăр. Тивĕçлĕ канăва тухнă нумай ачаллă амăшĕсене халех ырă хыпарпа савăнтарма пулать – 2014 çулта ĕç пенсине ачана 1,5 çула çитиччен пăхнă тапхăра пысăклатнине тĕпе хурса çĕнĕрен шутласа параççĕ.**

– Çапла, кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен амăшĕсен пенси прависене ачасене çулталăк çурăна /анчах пĕтĕмпе 4,5 çултан мала мар/ çитиччен пăхнă тапхăра тĕпе хурса тепĕр хут хаклаççĕ. Урăхла каласан халĕ виçĕ ачана пăхнă тапхăра – кашниншĕн 1,5 çул – стажа кĕртеççĕ.

Нумай ачаллă амăшĕсен пенси ирĕкне Пенси фондĕнче упранакан кăтартусем тăрăх палăртаççĕ. Виççĕмĕш ача çуралнине ĕнентерекен документа ашшĕ-амăшĕ унта çитермен тĕк кирек хăш вăхăтра пырса пама юрать – страховани çулталăкĕн хакне тĕпе хурса пенсие кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен шутлаççĕ.

2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхнă тапхăр тăсăмне 6 çула çитереççĕ.

**– Ку çĕнĕлĕх амăшĕсенчен кашниех пырса тивет-и?**

– Çĕнĕлĕх 2002 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ачана 1,5 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнисем тĕлĕшпе вăйра тăрать, мĕншĕн тесен çав тапхăршăн Пенси фондне тӳлемелли страховани взносĕсене шутласа паман, çавна май 3 çултан ытларах вăхăт пенси виçине витĕм кӳмен.

Асăннă отпускра 2002 çулччен пулнисене илес тĕк çак тапхăрсене пенси палăртнă чухне шута илменнисенне кăна çĕнĕрен шутлаççĕ. Сăмахран, кил хуçи хĕрарăмĕсенне, студентсенне, урăхла каласан ачапа ларнă вăхăтра ĕç вырăнĕ пулманнисенне. Асăннă тапхăрта ĕç хутшăнăвĕсенче тăнă /ачана 1,5 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ/ хĕрарăмсене ăна пенси шутламалли стажа кĕртсе панă.

**– Кăçалхи ырă хыпарсенчен тепри – амăшĕн капиталне индексацилесе 429408 тенке çитерни. Роза Алексеевна, республикăра унăн сертификатне тивĕçнисем йышлă-и?**

– Амăшĕн капиталĕ пирки йышăннă федераци саккунĕ пурнăçа кĕнĕ 7 çулта пирĕн республикăра унăн сертификатне 50 пин ытла çемье илнĕ. Вĕсен çурриĕ капитал укçипе 9 млрд тенкĕлĕх хуçаланнă ĕнтĕ. Пĕлтĕр ку енĕпе чылайăшĕн – саккун вăй илнĕренпе патшалăх пулăшăвĕн хушма мерипе усă курма ирĕк пуррисен 25 проценчĕн – ыйтăвне тивĕçтернĕ.

**– Çемье капиталĕн укçипе ашшĕ-амăшĕ хăш тĕллевпе ытларах усă курать?**

– Чылайăшĕ çав шутпа пурăнмалли условисене лайăхлатнă – 27 пин çемье 9,1 млрд тенкĕ тăкакланă. Тĕпрен илсен вĕсем пурăнмалли çурт-йĕр кредичĕсене саплаштарнă. Çурт-йĕр туянакан тата пая кĕрсе строительствăна хутшăнакан, подряд организацийĕн пулăшăвне тивĕçмесĕр харпăр хăй пӳртне çĕклекен тата çĕнетсе улăштаракан, хваттер туянма е çурт лартма кредит илнĕ чухне малтанхи взноса тӳлекен сахал мар.

**– Амăшĕн капиталĕпе ачисене пĕлӳ парас текенсем йышлă-и?**

– Ывăл-хĕрне аслă шкулта, колледжра пĕлӳ панăшăн, ачисене яслисада çӳретнĕшĕн тӳлеме пирĕн республикăри 847 çемье амăшĕн капиталĕ шутĕнчен 25 млн тенкĕ тăкакланă.

Çапла майпа çемьери кирек хăш ачана /вĕренме тытăннă чухнехи ӳсĕм 25 çултан иртмелле мар/ та Раççейри вĕренӳ учрежденийĕсенче /паллах, вĕсен вĕренӳ пулăшăвĕпе тивĕçтермешкĕн право пулсан/ пĕлӳ пама юрать. Унсăр пуçне çав тапхăрта общежитире пурăннăшăн амăшĕн капиталĕ шучĕпе тӳлеме юрать – ку ирĕкпе 9 çын 90 пин ытла тенкĕлĕх усă курнă. Ачасен ăсталăхне вĕренӳ курсĕнче пуянлатнăшăн, тĕслĕхрен, ют чĕлхе вĕрентнĕшĕн, тӳлеме май пур – кун пек чухне патшалăх аккредитацийĕ илнĕ учрежденипе çирĕплетнĕ килĕшӳ кирлĕ.

2011 çултан амăшĕн капиталне ачана муниципалитетăн е уйрăм çыннăн ясли-садĕнче пăхса усранăшăн тӳлемешкĕн тăкаклама ирĕк панă – асăннă мелпе республикăри 183 çемье пуçаруллă усă курать – вĕсемшĕн ясли-садсене çак тĕллевпе 1,3 млн тенкĕ куçарса панă.

Ачисене шкул умĕнхи учреждение çӳретнĕшĕн амăшĕн капиталĕн шутĕнчен тӳлес шухăшлă ашшĕ-амăшĕн Пенси фондне ясли-садпа тунă килĕшĕве çитермелле, унта тӳлев виçине тата укçа куçармалли реквизитсене кăтартмалла. Пĕрремĕш тӳлев заявлени çырнăранпа икĕ уйăхран кая юлмасăр çитет, ытти – килĕшӳре кăтартнă вăхăтра.

**– Роза Алексеевна, капитал укçине амăшĕн пулас пенсийĕн пухăнса пыракан пайне ӳстермешкĕн хывас пирки заявлени паракан пур-и?**

– Çĕр-шывĕпе илес тĕк унашкал заявленисем 2 пине яхăн, Чăваш Енре хальлĕхе çук. Амăшĕсене çакна пĕлтерес тетĕп: 2015 çулта пенсин пухăнса пыракан пайĕ хăй тĕллĕн /пухăнса пыракан пенси/ пулса тăрать, ăна кашни çын суйласа илсе йĕркелеме пултарать. Çавна май саккун кăларакансем амăшĕсене хăйсен ирĕкĕпе çемье капиталĕн укçине пухăнса пыракан пенсие йĕркелеме кăна мар, страхлаканнине пуянлатмашкăн яма та май туса памалла.

**Пичете Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**



# Çынсене мĕн пăшăрхантарать?

**2014 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕнче иртнĕ Пĕрлехи информаци кунĕнче граждансенчен килнĕ ыйтусен хуравĕсем**

**Республикăн «Чăваш Республикинчи ялсенчи культурăпа кану учрежденийĕсене модернизацилесси» программипе Чăваш Енри хуласенче те усă курма пулать-и?** И.Благовидова, Улатăрти централизациленĕ библиотека тытăмĕн директорĕ.

**ЧР Культура министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Муниципалитетăн Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкипе оборудованипе пуянлатмалли культурăпа кану учрежденийĕсене конкурспа суйласа илмелли йĕркепе /ăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн хушăвĕпе çирĕплетнĕ/ ЧР Культура министерстви кашни çулах конкурс ирттересси çинчен пĕлтерет. Унта мĕн пур муниципалитетăн культурăпа кану учрежденийĕсем хутшăнма пултараççĕ, çав шутра хуларисем те.

**2014 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Ураскилт ялĕнче ача сачĕ уçĕç-и?** З.Степанова, Тури Вылă ял клубĕн-библиотекин заведующийĕ, Элĕк районĕ.

**ЧР Вĕренӳ министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикин 2012-2020 çулсенче «Вĕренӳ аталантарасси» патшалăх программипе килĕшӳллĕн 2014 çулта «Ураскилтри пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулăн» бюджет учрежденийĕн ача сачĕн çуртне юсама пуçламашкăн палăртнă.

Объекта 2015 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче хута яма пăхнă.

**Республика пĕлтерĕшлĕ «Шупашкар-Сăр» автоçулăн сыпăкне Калинино сали айккипе тума палăртаççĕ-и? Хальхи вăхăтра çул сала витĕр иртет. Палăртнă тăк хăш çулта тума пăхнă?** Л.Иванова, Калинино ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, Вăрнар районĕ.

**ЧР Транспорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – çак çулăн 5,6 километр тăршшĕ лаптăкне тумалли проект пур, патшалăх экспертизи ăна лайăх хак панă.

Транспорт министерстви Инвестици политики енĕпе ĕçлекен канашра пăхса тухмашкăн ЧР Экономика аталанăвĕн министерствине çак çула тума заявка хатĕрлесе палăртнă вăхăтра ярса панă. Объекта Республикăн пайăр инвестици программине кĕртессине республика бюджечĕн майĕсене кура пăхса тухрĕç.

**«Йĕпреç-Буинск» тата «Буинск-Йĕпреç» автобус маршрутне уçас мая пăхса тухма ыйтатăп.** Л.Григорьева, Йĕпреç районĕ, Буинск поселокĕ.

**ЧР Транспорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра «Чăвашавтотранс» патшалăх унитари предприятийĕ автобуссене Буинск поселокне кĕмелле тумашкăн «Йĕпреç-Çăкалăх» маршрутăн схемипе расписанине тивĕçлĕ улшăнусем кĕртет.

Маршрута улăштарни çинчен ЧР Транспорт министерстви автовокзалсемпе автостанцисене тивĕçлĕ йĕркепе пĕлтерĕ.

**«Сатурн-Строй» тулли мар яваплă юлташлăх Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси ялĕнчи çĕнĕ урама – Канаш урамне – электричество кĕртмелли ĕçсене пурнăçламан. Тӳрĕ мар кăмăллă подрядчик тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăннă?** А.Александрова, Йĕпреç районĕ, Кĕлĕмкасси сали.

**ЧР Строительство министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – «Сатурн-Строй» ООО подряд организацийĕ Йĕпреç районĕнче электричествăпа тивĕçтерекен 8 объекта тăвать, çав шутра Кĕлĕмкасси салинче Канаш урамне те /çак ĕçсене 2010 çулта вĕçлемелле пулнă/. Подряд организацийĕ ĕçсене пурнăçламалли вăхăта пăхăнманнипе ЧР Строительство министерстви 2013 çул пуçламăшĕнче патшалăх килĕшĕвне пăрахăçласси тата «Сатурн-Строй» тулли мар яваплă юлташлăхран килĕшĕве пурнăçламаншăн штраф шыраса илесси çинчен Арбитраж судне тавăç тăратнă. Арбитраж сучĕн 2013 çулхи çурла уйăхĕнчи йышăнăвĕпе штраф шыраса илнĕ.

«Сатурн-Строй» ООО подряд организацийĕ Йĕпреç районĕнчи электричествăпа тивĕçтермелли объектсен строительствине 2014 çулта вĕçлеме палăртнă.

**Красноармейски районĕнчи Яманакри фельдшерпа акушер пунктне тĕпрен юсама е модуль фельдшерпа акушер пунктне тума палăртаççĕ-и?** Ю.Пирошкин, Красноармейски районĕ, Яманак ялĕ.

**ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Яманакри фельдшерпа акушер пункчĕн çуртне 1970 çулта тунă, ăна тĕпрен юсамалла.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕнчи указне пурнăçласа министерство модуль ФАПсем тăвассине пурнăçа кĕртет, 2013 çулта акă Красноармейски районĕнчи Кушкă ялĕнче çĕнĕрен фельдшерпа акушер пунктне ĕçе кĕртнĕ, кăçал Янмурçин ялĕнче те çакнашкал учреждени тăвасшăн.

Яманакри фельдшерпа акушер пунктне тĕпрен юсамашкăн укçа уйăрма çук, мĕншĕн тесен республикăн 2014 çулхи бюджетне йĕркеленĕ ĕнтĕ.

**Чăваш Ен Правительстви ялсенче культура учрежденийĕсене квалификациллĕ специалистсене явăçтарас тĕлĕшпе мĕн тăвать?** Е.Лысова, Сĕнтĕрвăрри хули.

**ЧР Культура министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – культурăпа искусство специалисчĕсен квалификацине ӳстермелли курссем йĕркелес, вĕсене çĕнĕрен хатĕрлес енĕпе Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институчĕ ĕçлет. Вĕренӳ процесне бюджет никĕсĕ çинче план-график тăрăх йĕркелесе пыраççĕ, ăна институт кашни çулах вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн министерствăпа килĕшсе план-саккаспа килĕшӳллĕн хатĕрлет. Коммерци никĕсĕ çинче институт, юридици сăпатĕнче тăракан тата уйрăм çын килĕшӳ туса квалификацие ӳстерме пулать.

Республикăра 2013-2015 çулсенче Муниципалитет культура учрежденийĕсен ертӳçисен тата специалисчĕсен ертсе пырас ĕçри компетентлăхне ӳстермелли программа пур. Иртнĕ çулта регионта культурăпа искусство тытăмĕнчи вĕренӳ учрежденийĕсен сетьне сыхласа хăварма май килнине палăртмалла.

**Муркаш районĕн тĕп больницин сменăра 500 çын йышăнма пултаракан поликлиникине тума укçа-тенкĕ пăхса хăварĕç-и? Поликлиника проекчĕ пур.** Г.Федотова, Муркаш районĕн тĕп больницин поликлиникин заведующийĕ.

**ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – паян больница поликлиникин пӳлĕмĕсем тĕрлĕ çĕрте вырнаçнă. Поликлиникăн тĕп корпусĕ 2 хутлă, ăна 1982 çулта хута янă, сменăра 300 çынна йышăнма пултарать. Поликлиника пӳлĕмĕсене хальхи вăхăт ыйтнă пек йĕркелес тĕллевпе, Муркаш районĕнче поликлиникăна халăх ытларах пынине шута илсе район администрацийĕ сменăра 500 пациента йышăнма пултаракан поликлиникăн çĕнĕ çуртне тума йышăннă. 2010 çулта поликлиника çуртне тума проектпа смета докуменчĕсене хатĕрлесе çирĕплетнĕ.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви поликлиникăн çĕнĕ çуртне тума йышăннине ырлать, çавăнпа пĕрлех республика бюджетĕнче укçа-тенкĕ çителĕксĕр пулнипе хальхи вăхăтра объекта тумашкăн укçа уйăрма май çукки çинчен пĕлтерет.

2015-2017 çулсем валли бюджет заявкине йĕркеленĕ чухне министерство больница поликлиникин строительствин проектне шута илĕ.

**Кавал тата Чăрăшçырма ялĕсен хушшинчи автоçула юсама палăртаççĕ-и?** М.Табакова, Вăрмар районĕ, Кавал ялĕ.

**ЧР Транспорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – çак автоçул вырăнти пĕлтерĕшлĕ автоçул шутне кĕрет. Федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн вырăнти пĕлтерĕшлĕ автоçулсем тĕлĕшпе ĕçсем пурнăçласси вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне кĕрет, ку тĕлĕшпе вырăнти бюджет укçипе усă курмалла.

**Вăрмар район администрацийĕ** пĕлтернĕ тăрăх – вырăнти бюджет укçипе тăвакан çул-йĕр ĕçĕсен списокĕнче Кавалпа Чăрăшçырма ялĕсен хушшинчи автоçула юсассине вырăнти бюджетра укçа сахаллипе 2014 çула пăхса хăварман. Çитес çулсенче объекта вырăнти бюджет майĕсене кура юсама палăртаççĕ.

**Ялти почтальонсем хушма ĕç пурнăçлаççĕ – куллен кирлĕ таварсем сутаççĕ. Ку ĕçе мĕнле пăрахăçлама пулать-ши?** Ю.Пудов, Çĕмĕрле районĕ, Тури Кăмаша ялĕ.

**Федерацин почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн – федерацин «Раççей почти» патшалăх унитари предприятийĕн** филиалĕн республикипе 384 уйрăм, вăл республикăн мĕн пур ялĕнче тенĕ пекех тĕрлĕ тавар ваккăн сутать. Халăх çак пулăшу ĕçĕпе хаваспах усă курать. Хăш-пĕр тавар почтăра ытти çĕртинчен йӳнĕрех. Инçетри ялсенчен нумайăшĕнче çынсем халăха кирлĕ таварсене почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче е почтальонсенчен çеç туянма пултараççĕ, унта лавкка тавраш ĕ çук. Çапла вара тавара ваккăн сутса Раççей почти социаллă пысăк пĕлтерĕшлĕ миссие пурнăçлать.

**Анат тата Тури Кăмаша ялĕсенче наци телекуравĕн кăларăмĕсене пăхаймастпăр. Çак ыйтăва татса пама пулăшăр.** Г.Уфилин, Çĕмĕрле районĕ, Тури Кăмаша ялĕ.

**ЧР Информаци политикин министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – «Чăваш Ен Наци телекуравĕн» программисене хальхи вăхăтра кабель сечĕсенче трансляциleççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Тури Кăмаша тата Анат Кăмаша ялĕсенче пурăнакансем телекурав сигналне антеннăсем тата спутник урлă йышăнаççĕ. Юлашки çулсенче яллă районсенче спутник телекуравĕн абоненчĕсен йышĕ ӳсет. Анчах та спутник каналĕсен сĕнекен пакечĕсенче хальлĕхе Чăваш Ен Наци телекуравĕн телепрограммисене тăратман. Çавна май Чăваш Ен Наци телерадиокомпанийĕ спутник телехыпарлав операторĕсемпе телесигнала спутник урлă çитерес ыйтупа ĕçлет.

Çав вăхăтрах ялсенче пурăнакансем Чăваш Ен телекуравĕн кăларăмĕсене Интернет урлă паянах пăхма пултараççĕ.

**Удобрени, çунтармалли-сĕрмелли материал туянса тăкакланнăшăн мĕншĕн-ха субсиди памаççĕ?** В.Александров, «Заветы Ильича» ЯХПК инженерĕ, Етĕрне районĕ.

**ЧР Ял хуçалăх министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ чухне Раççей аграрисене патшалăх енчен пулăшмалли тӳрĕ формăсене чакарасси çинчен тивĕçсем йышăннă. Минерал удобренисем, çунтармалли-сĕрмелли материалсем туянма панă субсидисем шăпах çавсен шутне кĕнĕ. 2014 çултан пуçласа çĕр улми, пахча çимĕç туса илекен инфратытăм объекчĕсене тума, юсама тата техника енчен çĕнетме тăкаклакан укçа-тенке саплаштармашкăн республика бюджетĕнчен ял хуçалăхĕнче тавар туса кăларакансене патшалăх енчен пулăшу кӳрĕç.

**Пирĕн республикăра ача-пăча литератури кăларакансене мĕнлерех пулăшаççĕ?** И.Кириллов, Çĕмĕрле хули, депутатсен Пухăвĕн депутачĕ.

**ЧР Информаци политикин министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикинче социаллă пĕлтерĕшлĕ литература кăлармалли тематика планĕпе килĕшӳллĕн кĕнекесем пичетлеме республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăраççĕ. Ку плана тираж-килĕшӳ комиссийĕ, Социаллă пĕлтерĕшлĕ литература кăларассипе патшалăх политикине пурнăçлас енĕпе ĕçлекен канаш пĕрле пăхса тухаççĕ, ЧР Информаци политикин министерстви çирĕплетет. Тематика планне учебниксем, вĕрентӳпе методика, ача-пăча, илемлĕ тата ăслăлăх литератури кĕреççĕ. Ача-пăча литературине чăвашла кăлараççĕ. Акă 2013 çулта 22 кĕнеке кăларнă /20 – чăвашла, 1– чăвашла тата вырăсла, 1 – вырăсла/, 2014 çулта 22 кĕнеке кăларма палăртнă /17 – чăвашла, 3 – чăвашла тата вырăсла, 1 – вырăсла, 1 – вырăсла, чăвашла тата акăлчанла/.

Чăваш Республикинче 2012 çултан пуçласа çулленех ачасемпе çамрăксем валли хатĕрленĕ чăвашла кĕнекесен ал çырăвĕсен авторĕсене хавхалантарма грантсен конкурсне ирттереççĕ. 3 грант йĕркеленĕ: 50 пин тенкĕлĕх пĕр тата 75 пин тенкĕлĕх икĕ грант.

**«Çамрăк çемье» программа тăрăх субсидисене мĕншĕн-ха хваттере хулара туянакан çемьесене параççĕ? Мĕншĕн вĕсене чи малтанах ялта çурт-йĕр çавăракансене памаççĕ?** В.Максимова, Тăвай районĕ, Çĕнĕ Пуянкасси ялĕ.

**ЧР Строительство министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – федерацин 2011-2015 çулсене йышăннă «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программин «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессси» çум программипе килĕшӳллĕн çамрăк çемьесене – çум программăна хутшăнакансене – пурăнмалли çурт-йĕр туянма /тума/ социаллă тӳлевсене ыйтса çырнине хăçан тăратнине кура Чăваш Республикин территорийĕнче çурт-йĕре ăçта туяннине /тунине/ пăхмасăр параççĕ.




*Коллеги*

# Ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ, тĕллевсене палăртнă

***Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ культура керменĕнче ЧР Физкультурăпа спорт министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕ иртнĕ. Унта ведомствăн пĕлтĕрхи ĕçĕ-хĕлне пĕтĕмлетнĕ, кăçалхи тĕллевсене палăртнă.***



Тĕп темăпа ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников паллаштарнă. Докладра вăл Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе Раççейре малти ретре тăнине, пирĕн республика иртнĕ çулхи кăтартусемпе чи лайăх регионсен йышне кĕнине тепĕр хут аса илтернĕ. Министр пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енре пурăнакан мĕн пур халăх йышĕнчен 32 процентĕ физкультурăпа тата спортпа туслă. Çакă спорт инфратытăмне аталантарнипе çыхăннă. Пĕлтĕр Шупашкарта физкультурăпа спорт комплексĕ, бассейн, Çĕнĕ Шупашкарта çăмăл атлетика манежĕ, Çĕмĕрлепе Йĕпреçре футбол уйĕсем хута кайнă. "Олимпийский" стадионта Пăр керменĕ тата маунтинбайк центрĕ, Вăрнарта каток çĕклемет, биатлонçăсемпе йĕлтĕрçĕсен центрĕнче строительство ĕçĕсем пуçланнă, Олимп резервĕсен 1-мĕш спорт шкулне çĕнетме тытăннă. Çак ĕçсене пурнăçлама 2013 çулта федераци бюджечĕ 350 млн тенкĕ уйăрнă, республика 450 млн тенкĕ тăкакланă.

Сергей Владимирович районсенчи физкультурăпа спорт комплексĕсем епле ĕçлени çинчен те каланă. "Керменсене çӳрекен çултан çул йышланать. Канаш, Элĕк, Куславкка, Муркаш, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă районĕсенчи ФСКсене уйрăмах çын нумай çӳрет. Спорт комплексĕ ачасемшĕн те, çитĕннисемшĕн те чи юратнă вырăн. Бассейнсенче физкультура урокĕсене ирттерме тытăнни савăнтарать, вĕренекенсене ятарлă автобуссемпе илсе çӳреççĕ. 2013 çулта чылай предприяти-организаципе килĕшӳсем тунă, 15 пин çын сывлăхне çирĕплетнĕ. ФСКсенче çулталăкне вун-вун ăмăрту йĕркелеççĕ, сывлăх кунĕсем ирттересси йăлана кĕчĕ", – пĕлтернĕ министр.

2013 çулхи çитĕнӳсемпе паллаштарнă май Сергей Мельников спорт резервне хатĕрлессипе мĕнле ĕçсем пурнăçлани пирки те чарăнса тăнă. "Спорт шкулĕсенче 30872 çамрăк ăсталăха туптать, ку мĕн пур вĕренекенсен 25 процентĕпе танлашать. 2015 çул тĕлне çак виçене ӳстермелле, кашни иккĕмĕш ача спорт шкулне çӳремелле", – тенĕ министр. Раççейĕн пĕрлештернĕ командинче – 148 спортсмен. Вĕсем тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче – хĕллехи тата çуллахи Универсиадăсенче, тĕнче чемпионатĕнче, Сурдлимп тата Олимп вăййисенче – Чăваш Ен чысне тивĕçлĕн хӳтĕленĕ. Аса илтермелле: 1972 çултанпа пĕрремĕш хут пирĕн спортсменка Елена Муратова хĕллехи Олимпиадăна хутшăннă. Хальхи вăхăтра атлетсем 2016 çулта иртекен çуллахи Олимп тата Паралимп вăййисене хатĕрленеççĕ.

Республикăра массăллă спорта аталантарас тĕллевпе чылай мероприяти ирттернĕ. Сергей Мельников каланă тăрăх – "Раççей йĕлтĕр йĕрĕ", "Наци кросĕ", "Олимп кунĕ" спорт уявĕсене çын уйрăмах йышлă хутшăнать. Кашни районта пуçлăхсен, предприяти-организаци ертӳçисен, республикăри паллă çынсен парнисене çĕнсе илессишĕн пысăк турнирсем йĕркелеççĕ. Пĕлтĕр Чăваш Енре Раççей шайĕнчи 64 ăмăрту иртнĕ, Атăлçи округĕнчи – 17, республикăри – 270. Унта 280 пин спортсмен вăй виçнĕ.

Сергей Владимирович малашлăх тĕллевсене те палăртнă: спорт шкулĕсене çӳрекенсен йышне пысăклатмалла, спорт резервне хатĕрлес ĕçе çĕнетмелле, тренер-преподавательсен квалификацине ӳстермелле, 2015-2018 çулсенче Шупашкарта иртекен çăмăл атлетика енĕпе командăсен чемпионатне, хăвăрт утакансен тĕнче кубокĕсене хатĕрленмелле. Çавăн пекех ларура смотр-конкурссен çĕнтерӳçисене чысланă. Пĕлтĕр район-хулара физкультурăпа сиплев тата спортпа массăллă ĕçе Патăрьел, Елчĕк тата Канаш тăрăхĕсенче лайăх йĕркеленĕ. Физкультурăпа спорт керменĕсенчен Шăмăршăри "Туслăх", Кӳкеçри "Улăп", Элĕкри "Хĕлхем", Куславккари "Атăл", Вăрмарти "Илем", Патăрьелти "Паттăр" пысăк кăтартусемпе палăрнă. Патăрьелти, Вăрмарти А.Федоров ячĕллĕ тата Елчĕкри А.Игнатьев ячĕллĕ спорт шкулĕсем – чи лайăххисем. Олимп резервĕсен ятарлă шкулĕсен хушшинче пĕлтĕрхи пекех Çĕнĕ Шупашкарти 3-мĕш спорт шкулне çитекенни пулман.

■ **Андрей ПЕТРОВ**

*Кикбоксинг*

# Аслисенчен тĕслĕх илеççĕ

***Чăваш Ен боксерĕсем хамăр çĕр-шывра та, тĕнчере те тахçанах ят илнĕ. Тĕрлĕ чемпионат çĕнтерӳçисене Алексей Соловьева, Николай Алешева, Александр Федорова, Ирина Спиридоновăна паян пирĕн республикăра пĕлмен çын çук. Çамрăксем те вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ, чылай ăмăртуран çитĕнӳпе таврăнаççĕ.***



Нумаях пулмасть Йĕпреç районĕнчи "Патвар" физкультурăпа спорт керменĕнче Афганистанра тата Çурçĕр Кавказра пуç хунă салтаксене асăнса пысăк турнир йĕркелерĕç. Спортсменсем медальсен 14 коплектне çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕç. Чи сумлă наградăсене республикăн темиçе хут чемпионки, 10-ри Елизавета Герасимова, çĕршыв чемпионĕ Денис Павлов, тĕнче кубокĕн призерĕ Артур Шишокин тивĕçрĕç.

Черетлĕ ăмăрту Тольятти хулинче иртнĕ, унта боксерсем федерацин Атăлçи округĕнче мала тухассишĕн тупăшнă. ЧР кикбоксинг федерацийĕн президенчĕ Алексей Соловьев пĕлтернĕ тăрăх – чемпионата Чăваш Енрен 7 спортсмен хутшăннă, вĕсем пухмача 2 "ылтăнпа", 1 "кĕмĕлпе" тата 1 "бронзăпа" пуянлатнă. Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн çуртĕнчи спорт секцийĕнче ăсталăха туптакан Денис Павлов 57 килограмлă виçере çĕнтернĕ, арçынсен ушкăнĕнче Артур Шишокин пĕрремĕш вырăн йышăннă. Александр Потаповпа Роман Крапива çамрăк боксерсем хăйсен виçисенче кĕмĕлпе бронза медальсем çĕнсе илнĕ.

■ **Е.АНДРЕЕВ**

*Республика тулашĕнче*

# Пĕрремĕш ăмăрту

***Вунă çула яхăн кĕрленĕ Афган вăрçи паян та халăх асĕнчех. Епле-ха манăн: хаяр çапăçусенче пин-пин салтак пуç хунă, вĕсен йышĕнче чăваш та сахал мар. Афганистанра çар тивĕçне пурнăçласа вилнĕ каччăсемпе арçынсене асăнса кашни регионта тĕрлĕ ăмăрту йĕркелеççĕ.***



Нумаях пулмасть Мускав облаçĕнчи Химки хулинчи техникумра Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕсене, кунтан вĕренсе тухнă Сергей Михуткинпа Игорь Жаринов интернационалист-воинсене халалласа кĕрешӳ енĕпе регионсен хушшинчи ăмăрту иртрĕ. Пĕрремĕш турнира Тутар, Хакас, Чăваш республикисенчен, Мускав облаçĕпе хулинчен 60 ытла спортсмен пухăнчĕ. Пăхаттирсемпе вĕсен вĕрентекенĕсене Чăваш Республикин РФ Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков, Мускав чăвашĕсен наци-культура автономийĕн ертӳçи Анатолий Григорьев, Афганистан вăрçин ветеранĕ Владимир Вшивцев тата ытти хăна саламларĕç.

Ăмăртура пирвайхи хут вăй виçекен шкул ачисем, ăсталăхне нумай çул туптакан çамрăксем, чылай çитĕнӳпе палăрнă спортсменсем хастаррăн кĕрешрĕç. Чăваш Енрен унта Канаш, Тăвай районĕсен тата Шупашкар хулин спортсменĕсем хутшăнчĕç. Пирĕн ентешсенчен Илья Талаев /тренерĕ В.Васильев, Шупашкар/, Евгения Гурьева /тренерĕ В.Владимиров, Тăвай районĕ, Енĕш Нăрваш/, Евгений Орлов, Алексей Платонов тата Алена Тимофеева /тренерĕ С.Герасимов, Канаш районĕ, Каракăлă/ хăйсен виçисенче палăрчĕç.

■ **Виталий ВАСИЛЬЕВ,**
**ЧР кĕрешӳ федерацийĕн ертӳçи**

*Конькипе чупасси*

# Ярăнаççĕ пăр çинче...



***Чăваш Енре коньки спорчĕ 105 çул каялла аталанма пуçланă: 1908 çулта Пăрачкаври учительсен семинарийĕнче пирвайхи хут каток уçăлнă, çавăн чухнех вĕренекенсем валли конькисем туяннă.***

### Энциклопеди пĕлтерет

Вĕсене кура Улатăр, Етĕрне, Шупашкар хулисенче пурăнакансем те коньки çине тăма пуçланă. Ун чухне çамрăксем ытларах йывăçран хатĕрленĕ конькисемпе усă курнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче хăш-пĕр шкулта конькипе чупакансен ушкăнĕсем йĕркеленме тытăннă. 1930 çулта Шупашкарта пĕрремĕш хут конькиçĕсен ăмăртăвне ирттернĕ. Ун чухне малти вырăнсене А.Беспалов, В.Платунов, Н.Енчиков, Н.Никулина, пĕр тăван Осаковсем йышăннă. Чăваш Енре 1938 çулта иртнĕ пирвайхи чемпионатра В.Никишева çĕнтернĕ.

Республикăра коньки спорчĕ 40-мĕш çулсенче вăй илнĕ. Ун чухне район-хулара вун-вун ăмăрту ирттернĕ, пирĕн спортсменсем çĕр-шыв турнирĕсене хутшăннă. 1956 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕн студенчĕ В.Родионов СССР спорт мастерĕн нормативне тултарнă, Раççей чемпионĕн ятне тивĕçнĕ. Çав тапхăрта "Буревестник" пĕрлешӳ çумĕнче спорт шкулĕ ĕçленĕ. Унта ăсталăха туптакан спортсменсем чылай ăмăртура палăрнă: Л.Морозова – тĕнче кубокĕн призерĕ, Л.Егорова – СССР чемпионачĕн призерĕ, В.Васиковпа В.Моделов – спортăн тĕнче класлă мастерĕсем, Вăрнар каччи Н.Гамаюнов – СССР чемпионĕ. Коньки спортне аталантарас енĕпе А.Егоров, В.Сафонова, Б.Елизаров, Г.Дубровин, Н.Старшов, Ю.Краснов тата А.Никандров тренерсем нумай вăй хунă.

Паянхи кун конькиçĕсен секцийĕсем Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче лайăх ĕçлеççĕ, вĕсенче 500 яхăн ача ăсталăха туптать.

### "Пирĕн шанăç"

Çак пулăма халалласа нарăс-пуш уйăхĕсенче республикăра пысăк ăмăртусем иртнĕ. Чи малтан спортсменсем нумай енлĕ кĕрешӳ енĕпе Чăваш Республикин чемпионатĕнче тупăшнă. Çĕнĕ Шупашкарти А.Г.Николаев ячĕллĕ стадионта иртнĕ ăмăртăва ачасем, яшсемпе хĕрсем, юниорсем хутшăннă. Чи пултаруллисен хушшинче пьедестал çине спорт мастерĕн кандидачĕсем Иван Петровпа Галина Казанбаева /Шупашкар/ хăпарнă, аслăраххисен йышĕнче пиччĕшĕпе йăмăкĕ, Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекен Атнерпе Салампи Федоровсем çĕнтернĕ. Палăртса хăвармалла: вĕсен аппăшĕ Надежда та республика чемпионки /2013/, халĕ вăл çĕр-шыв кубокĕн финалне хатĕрленет. Ытти ушкăнра Çĕнĕ Шупашкарти Кирилл Андреев, Тимур Карамов, Эвелинăпа Дарья Охримкинсем тата Кирилл Архипов мала тухнă.

Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче республикăри 450 ытла конькиçĕ Пĕтĕм Раççейĕпе иртнĕ "Пирĕн шанăç" турнирта вăй виçнĕ. ЧР конькипе чупакансен федерацийĕн ертӳçи Александр Никандров пĕлтернĕ тăрăх – ачасемпе çамрăксене спортпа туслаштарас тĕллевпе йĕркеленĕ ăмăртура кашни çул чылай çын хутшăнать. Пĕлтĕр, калăпăр, 500 яхăн пулнă. Кăçал унта Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисен, Етĕрне, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ тата Канаш районĕсен спортсменĕсем уйрăмах палăрнă.

Çак кунсенче Çĕнĕ Шупашкарти пăр çине ветерансем тухнă. Пирĕн ентешсемсĕр пуçне ăмăртура Мускав, Хусан, Чул хула, Самар, Чаллă, Димитровград конькиçисем те тупăшнă. Турнирта Шупашкарти Иван Петров, Александр Профоров, Александр Смирнов, Николай Зайцев, Дмитрий Паликов, Зинаида Игнатьева, Нина Николаева, Галина Казанбаева тата ыттисем малти вырăнсене йышăннă.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

# Ентешсем – чи лайăххисем

***Пилĕк çул каялла Санкт-Петербургра "Гиревой спорт в России и в мире" журнал тухма пуçларĕ. Кире пуканĕ спорчĕн ятарлă кăларăмне кун çути кăтартас тĕлĕшпе Куславкка районĕнче çуралса ӳснĕ пирĕн мухтавлă ентеш, халĕ Ленинград облаçĕнче пурăнакан офицер, тĕнче чемпионĕ тата рекордсменĕ, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Сергей Кириллов пысăк ĕç тунă.***

Çак кунсенче тимĕр вăййине юратакансем патне журналăн кăçалхи пĕрремĕш номерĕ çитрĕ. Вăл пирĕн ентешсене уйрăмах савăнтарать. Журналăн малтанхи страницисенче 2013 çулта иртнĕ тĕнче, Европа, çĕр-шыв чемпионачĕсен тата чи пысăк ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕсене тĕпе хурса пĕрремĕш теçеткери вырăнсене йышăннă атлетсен хушамачĕсене тата вĕсен чи лайăх кăтартăвĕсене пичетленĕ. Çак спискра – пирĕн республикăри пилĕк спортсмен.

Чăваш пăхаттирĕсенчен иккĕшĕ – Сергей Соловьевпа Александр Павлов, Раççей спорт мастерĕсем Елчĕк районĕнчи Кавал ялĕнче çуралса ӳснĕ, А.В.Игнатьев олимпиец ячĕллĕ спорт шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ. Пĕр урамра çитĕннĕ каччăсем пĕрремĕш çитĕнĕвĕсене "Хыпар" хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн 2008-2011 çулсенче Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри турнирсенче кăтартнă, вун тăхăр çултах республика рекорчĕсене темиçе хут лайăхлатнă. Виçĕм çул С.Соловьев 68 килограмлă виçере ăмăртса çĕр-шыври тата Европăри 20 çултан çамрăкрах атлетсен ушкăнĕсенче пĕрремĕш вырăнсене йышăннă. Пĕлтĕр пирĕн ентеш, Омскри аслă çар училищинче вĕренекенскер, Раççей Хĕç-пăшаллă вăйсен кубокне çĕнсе илессишĕн Киров хулинче иртнĕ ăмăртусенче 73 килограмлă виçере палăрнă. Пулас офицер унта 32 килограмлă икĕ кире пуканне кăкăр çинчен 120/!/ хут тĕртнĕ, икĕ енлĕ кĕрешӳре 185,5 очко пухнă. Çак кăтартусемпе вăл кире пуканĕ спорчĕн журналĕнче пичетленнĕ спискра тăваттăмĕш вырăнта. Сергей тусĕ, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕ Саша Павлов – 9-мĕш йĕркере.

Улатăр каччи Евгений Кочетков "Хыпар" хаçат турнирĕсенче 2009 çулта палăрма пуçларĕ, виçĕм çул вăл Европа чемпионатĕнче çĕнтерчĕ. Пĕлтĕр çĕр-шыври Хĕç-пăшаллă вăйсен кубокне çĕнсе илессишĕн пынă турнирта Улатăр хулин Хисеплĕ гражданинĕн, СССР спорт мастерĕн Валерий Притуленкăн вĕренекенĕ 95 килограмлă виçере ăмăртса икĕ енлĕ кĕрешӳре 206,5 очко пухнă. Çак кăтартупа Евгений çурма йывăр виçеллĕ пăхаттирсен списокĕнче улттăмĕш вырăнта.

Ульяновскра пурăнакан спорт мастерĕ Олег Щербин пĕлтĕр ЧР Патшалăх Канашĕн спикерĕн Ю.Поповăн, çавăн пекех Кӳкеçре "Хыпар" хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ йăлана кĕнĕ турнирсенче 68 килограмлă атлетсен хушшинче çĕнтерчĕ. Киров хулинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри турнирта Раççей çарĕн офицерĕ икĕ енлĕ кĕрешӳре 198,5 очко пухса ылтăн медаль çĕнсе илчĕ. Çак кăтартупа Олег çĕр-шыври çăмăл виçеллĕ атлетсен хушшинче пĕрремĕш вырăна тухнă. О.Щербинăн мăшăрĕ, Йĕпреç районĕнчи Пучинке хĕрĕ, Чăваш Енĕн нумай хут чемпионки Джанита Павлова пĕлтĕрхи кăтартусемпе 58 килограмлă хĕрарăмсен ушкăнĕнче спискра пиллĕкмĕш вырăнта. Джанитăн ентешĕ Марина Федорова 68 килограмлă хĕрсен ушкăнĕнче – саккăрмĕш.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн доценчĕ Владимир Симень те кире пуканĕ йăтса çĕр-шывра чапа тухнă. Юлашки çулсенче вăл тимĕр вăййине аталантарас ыйтупа икĕ монографи пичетлесе кăларчĕ. "Гиревой спорт в России и в мире" журналăн юлашки номерĕнче Владимир Петрович çырнă ăслăлăх ĕçĕ те пур.

■ **Петр СИДОРОВ,**
**РФ физкультурăпа спорт отличникĕ**

*Тĕслĕх*

# Пуçаруллă çамрăк тренер

***Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа ялĕнчи Николайпа Любовь Ярославлевсем – чылай çемьешĕн тĕслĕх. 7 ачине кун çути парнеленĕ ашшĕпе амăшĕ паян тĕпренчĕкĕсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанаççĕ. Пурте аслă пĕлӳллĕ, тĕрлĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Вулакансене Ярославлевсен вăтам хĕрĕпе – спорта чунне панă Еленăпа – паллаштарасшăн.***

Елена Кĕçĕн Таяпа шкулĕнче вĕреннĕ чухнех спорт енне туртăнать: çăмăл атлетикăпа, армспортпа кăсăкланать. Алă вăйĕ виçессипе малалла аталанма ăна физкультура учителĕ М.П.Скворцов пулăшать. Вĕрентекен явăçтарнипе вăл армспорт енĕпе район тата республика шайĕнчи ăмăртусене хутшăнать, малти вырăнсене йышăнать.

Шкул хыççăн пике И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн чăваш филологийĕпе культура факультетне çул тытать. Университетра чĕлхепе литературăна шĕкĕлченисĕр пуçне спортзала çӳреме те вăхăт тупать. Аслă вĕренӳ заведенийĕсен хушшинчи турнирсенче палăрнăран студенткăна А.Л.Атласкин тренер хăй хӳттине илет. Физкультура занятийĕсенче тренер хĕре ал-урана çирĕплетме хăнăхтарать. Тăрăшни харама каймасть: 2008 çулта Лена Раççей спорт мастерĕн нормативне тултарать.

Студент чухне Лена Елчĕк каччипе Денис Портновпа çемье çавăрать. Каярах вĕсен ывăл çуралать. Алла диплом илнĕ хыççăн çамрăк çемье тĕнче касса çӳрес темест, тăван тăрăхрах тĕпленет. "Аякри хулана та кайма май пурччĕ, анчах мăшăрăмпа иксĕмĕр те çуралнă вырăнтах юлас терĕмĕр. Елчĕкре пурăнма килĕшет: атте-анне те çывăхра, сывлăш та таса", – пĕлтерчĕ Лена Портнова. Армспорт енĕпе пысăк çитĕнӳсем пуррине кура ăна тӳрех районти спорт комплексне тренер пулма йыхравлаççĕ. Унта вăл ал-ура вăйне аталантарассипе занятисем ирттерет. Çамрăк вĕрентекен патне ăсталăха туптама пирвай Елчĕк шкулĕнче ăс пухакансем çӳреме пуçлаççĕ.



● *Елена Портнова /сылтăмра/.*

Ĕçне кура хисепĕ тени шăпах Лена пирки каланăнах туйăнать, икĕ çул хушшинче тăрăшулăхĕпе, пултарулăхĕпе палăрнăран ăна "Улăп" ФСКн директорĕн спорт енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма шанаççĕ. "Пурнăçа спортпа çыхăнтарнăшăн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Хам ĕçленĕ хушăра 37 ача армспорт енĕпе 1-мĕш разряда тивĕçрĕ, иккĕшĕ спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарчĕ. Спорт маншăн пĕтĕм пурнăç тесен те йăнăш мар. Сăмах май, мăшăрăмпа теннисла вылянă чухне паллашрăмăр. Денис – штанга йăтассипе спорт мастерĕн кандидачĕ. Ывăла та халех спортпа туслаштарасшăн, пĕчĕкле хăнăхтарни питĕ пĕлтерĕшлĕ", – палăртрĕ Елена Николаевна.

Паян спортăн пур тĕсĕпе аталанма район-хулари физкультурăпа спорт комплексĕсенче услови çителĕклĕ. Лена та çакнах çирĕплетет: "Районта пурăнакансем уйрăмах бассейна çӳреме кăмăллаççĕ, шкул ачисем физкультура урокĕсене те час-часах комплексра ирттереççĕ. Кăçалтан фитнес-аэробика секцийĕ ĕçлеме пуçларĕ".

Елена Портнова комплекса килнисене яланах тараваt, вăйхал çитнĕ таран сĕнӳ-канашпа пулăшать. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем, пушă вăхăта усăллă ирттерекенсем, çитĕнӳ патне ăнтăлакансем йышланасса шанас килет.

■ **Инна ЕГОРОВА**

**Кăларăма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

# КИЛТИ ХУÇАЛĂХ

## Çанталăка сăнатпăр: пуш уйăхĕнчи паллă кунсем

**22.** Çуркуннепе иккĕмĕш хут курнăçни, кайăксем йышлăн вĕççе килни. Кунĕ ăшă пулсан тата 40 кун ăшă тăрать, сивĕ пулсан – ирхине 40 хутчен тăм ӳкет. Кунпа çĕр тавлашаççĕ, хĕл вĕçленет, çуркунне пуçланать.

**30.** Ăшă Элекçи кунĕ: юр васкаса ирĕлет. Тăрисемпе шăнкăрчсем вĕççе килеççĕ, пулăсем хĕллехи тарăн вырăнсенчен тухаççĕ, кураксем йăва çавăраççĕ.

*Йăла-йĕрке*

## Аслă типĕ вăхăчĕ

Аслă типĕ вăхăчĕ яланхи пекех 7 эрнене пырать /Каçарнă Вырсарни кунран пуçласа Мăн кунччен/. Тунти кун /таса тунти кунсăр пуçне/, юн кун, эрне кун апата пĕçермесĕр çимелле /шыв, çăкăр, улма-çырла, пахча çимĕç, компот/; ытлари тата кĕçнерни кунсенче – çу хушман вĕри апат; шăмат тата вырсарни кунсенче – ӳсен-тăран çăвĕ хушнă апат.

Пăлхавăшни /Благовещени/ кунĕнче, Кăчкă праçникĕнче пулă çимелле. Лазарь шăмат кунĕнче пулă вăлчипе апатланмалла.

Чылайăшĕн пĕлтĕр çулла хатĕрленĕ тăварланă пахча çимĕç, кăмпа, тĕрлĕ варени çителĕклех. Паян шăпах вĕсене рациона кĕртмелле те. Мăн кун типпинче кишĕр, сухан, купăста, кăшман, симĕс пăрça, пан улми, апельсин тата, паллах, майăр сĕтел çинчен ан таталччăр.

*Мăн кун типпинче çиме*

## Сĕлĕ хăрпăкĕн салачĕ

**«Геркулес» сĕлĕ хăрпăкĕ – 3 апат кашăкĕ, вĕтетнĕ майăр /вăрман майăрĕ/ – 2 апат кашăкĕ, 2 чей кашăкĕ пыл, лимон сĕткенĕ кăштах, 2 пан улми кирлĕ.**

Сĕлĕ хăрпăкне çĕрле шыва ярса ирчченех тытмалла. Пан улмине шултра теркăпа хырмалла, лимон сĕткенĕ хушмалла. Пан улмипе сĕлĕ хăрпăкне, майăра хутăштармалла, пыл ямалла. Лайăх пăтратмалла.

## Хура тул пловĕ

**1 стакан хура тул кĕрпи, 1-2 кишĕр, 350 грамм кăмпа, 1 сухан, 2 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, тутине кура тăварпа пăрăç кирлĕ.**

Хура тул кĕрпине çумалла, 2 стакан шыва ямалла, тăвар сапмалла. Хупăпа хупласа вăтам çулăм çинче вĕреме кĕриччен пĕçермелле. Вĕреме кĕрсен шыв пăсланса пĕтиччен вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле. Хура тул пиçнĕ вăхăтра сухан, кишĕрпе кăмпа ăшаламалла. Хура тула çатмана ямалла, пур çимĕçе те пĕрле тата 5 минут ăшаламалла.

## Купăста яшки

**350 грамм типĕтнĕ уплюнкка, 400 грамм йӳçĕтнĕ купăста, 1-ер суханпа кишĕр, 2 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, 1 литр кăмпа шӳрпи, 1 чей кашăкĕ сăнăх, 2 апат кашăкĕ хăйма, тăвар, лавр çулçи, перец, петрушка кирлĕ.**

Уплюнккана 2 сехетлĕхе сивĕ шыва ямалла. Ун хыççăн сăрăхтармалла, çак шывран кăмпана пĕçермелле. Ăна дуршлаг çине хумалла, сивĕнсен улăм пĕрчи пек турамалла. Кăмпа шӳрпине сăрăхтармалла. Йӳçĕтнĕ купăстана кăштах ăшаламалла, кăмпа шӳрпи хушса 40 минут пăшăхламалла. Суханпа кишĕре улăм пĕрчи пек турамалла, юлнă çу çинче ăшаламалла. Шӳрпене çулăм çине лартса вĕреме кĕриччен тытмалла, сухан, кишĕр, купăста, кăмпа ярса 15 минут пĕçермелле. Ун хыççăн шӳрпене пăтратнă сăнăх, техĕмлĕхсем хушмалла, тата 15 минут пĕçермелле.

Ешĕл çимĕç хушса çимелле.

## Усăллă канашсем

●Писихисен металл эрешĕсем ӳт лекнĕ вырăнта тĕсне улăштараççĕ. Çакă япалана илемсĕрлетет, ӳте те канăçсăрлатать. Металла чĕрне сăрламалли лакпа витсен ыйту таталать.

●Хальхи вăхăтра савăт-сапа çумалли машина туяннă тăк кĕленче савăта йăлтăртатса тăракан пуличчен тасатма май пур. Çапах та пурин те çук-çке-ха вăл. Кил хуçисен совет тапхăрĕнче усă курнă меле аса илни пăсмĕ: хрустале тасатма вĕсем çĕр улми крахмалĕпе çăватчĕ. Ахаль стакансемпе черккесем те крахмал лексен сăнне улăштараççĕ.

●Çапла та пулкалать: çын хăнана кайса килнĕ – кĕпе-тумтирте апат-çимĕç шăрши кĕрет. Тасах темелле ĕнтĕ, анчах... Çапах та çумасăрах тăхăнма та май пур: урамра сивĕ – япалана балкон çине тухса çакмалла, ăшă – шăнтмăша хумалла. Сăмах май, капрон колготкăна е чăлхана тăхăничен 2-3 кунлăха шăнтмăша хурсан вăл çирĕпрех пулать, «куççем каймаççĕ», часах çĕтĕлмест.

●Кĕленче савăтри тăварланă помидора çисе ярăмасан хуппине сӳмелле те симĕтмĕше хумалла. Каярах унпа купăста яшки е рассольник пĕçернĕ чухне усă курма юрать.

## Кăмпа вăрттăнлăхĕсем

Организм кăмпана лайăххăн йышăнтăр тесен хатĕрлес умĕн ăна вĕтĕ-вĕтĕ турамалла.

Типĕтнĕ кăмпана кăштах вăхăт сĕтре тытни – халь татни пекех пулĕ. Техĕмлĕхсем яма кирлĕ мар – кăмпа техĕмĕ, тути çухалать.

Кăмпана чукун савăтра хатĕрлемелле. Цинкланă кастрюльте е тăм чӳлмекре пĕçерни сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратать.

Вăрман çимĕçне вăйсăр çулăм çинче хатĕрлесен лайăхрах.

Кăмпаран хатĕрленĕ салат тавраша /уйрăмах çĕр улмипе пĕрле пулсан/ ырана хăварма кирлĕ мар.

**Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ**

*Курав*

# Ытарлă пулăм



*Иртнĕ эрне кун Культура тата халăх пултарулăхĕн республика керменĕн «6х7» галерейинче Светлана Гордеевăн «Чечексен поэзийĕ» куравĕ уçăлчĕ.*

Светлана Денисовна чылайăшĕшĕн поэт пек паллă, вăл çулленех сăвă кĕнеки кăларать. Вĕсенче пурнăç илемне сăнлать, хăйĕн туйăмĕсене палăртать. Тĕлĕнмелле: çак майсене сăнарлă искусство мелĕпе те уçса парать вăл.Чăн-чăн пултарулăхшăн чикĕ çук иккенне ĕненмелле çирĕплетет çак тĕслĕх.

Çакă та тĕлĕнтерет: хăшне маларах – сăвă шăрçалама е ӳкерме – пуçланă-ши Светлана? Хăй çирĕплетнĕ тăрăх – иккĕшĕ те юнашарах «утнă». 1986 çулта Гомель хулинчи ӳнер училищинчен вĕренсе тухнă, 2001 çулта – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн вырăс филологи факультетĕнчен. Малтанхи вăхăтра «Шупашкар», «Дом торговли» универмагсенче художник-оформительте ĕçленĕ, алла филолог дипломне илсен – республикăра тухса тăракан тĕрлĕ хаçатра. Светлана Денисовна Раççей Патшалăх Думин депутачĕн пулăшуçи те пулнă. Кирек ăçта ĕçлесен те сăвă çырма та, картина ӳкерме те пăрахман.

Хăйĕн пĕрремĕш ятарлă куравĕ уçăлас умĕн ӳнерçĕ-сăвăçпа тĕл пулса калаçрăмăр. «Кунта маншăн пурнăçра питĕ пĕлтерĕшлĕ икĕ туртăм хӳтлĕх тупнă, – терĕ С.Гордеева. – Курава та çав ятах парас терĕм. Чечексем – çĕр çинчи чи ытарлă пулăм. Пĕрре пăхсан – вĕсен пĕлтерĕшĕ çук та пек, çын куçне илем кӳреççĕ çеç, çав вăхăтрах чуна савăнăçпа, телейпе пуянлатаççĕ». Ӳнерçĕн чечексене халалланă сăвă та сахал мар. Светлана Денисовна палăртнă тăрăх – кураври тюльпансемпе лантăшсене, кĕл чечексемпе шăнкăрав курăкĕсене, хĕвел çаврăнăшĕсемпе улмуççи çеçкисене юлашки икĕ çулта ӳкернĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

## Упăшкине – укçа тӳлесе...

***Мăшăр час-часах харкашнă та – арăмĕ çакăншăн упăшкине тĕп тума шут тытнă. Ăна вĕлерме киллера тара тытнă.***

Следстви комитечĕн Çĕнĕ Шупашкарти пайĕ çак тĕслĕхпе уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Вăл тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – 35 çулти хĕрарăм 46-ри упăшкине вĕлерме хатĕр çынна Интернетри социаллă сетьсенче тупнă. Хак пирки калаçса татăлнă – 2 пин евро. «Киллерпа» темиçе хут тĕл пулнă, ăна 10 пин тенкĕ аванс тӳленĕ, ыттине саккаса пурнăçланă хыççăн татма шантарнă.

Çак кунсенче тепĕр тĕл пулу иртнĕ – арçынна вĕлернине ĕнентермелле, тӳлевĕн юлнă пайне илмелле пулнă. «Киллер» ролĕнче кам пулнине чухларăр пуль, çавна май ку хутĕнче хĕрарăма полици тытса чарнă.

Хăй ăнлантарнă тăрăх – упăшки ăна пĕрле Вологда облаçĕнче пурăннă чухнех тарăхтарса çитернĕ, çавăнпа вĕлерттерес тенĕ. Хĕрарăмăн пĕчĕк икĕ ача пуррине кура хальлĕхе ăна хупса хуман, ниçта та тухса каймалла мар алă пустарнипе çырлахнă. Уголовлă ĕçе малалла тĕпчеççĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Налукçă коммерсантпа каварлашнă

***Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕççене тĕпчекен пайĕ Шупашкар хулин налук инспекцийĕн пай пуçлăхĕн çумĕ тата вырăнти коммерци организацийĕсенчен пĕрин директорĕ тĕлĕшпе айăплав тăратнă. Вĕсене взятка илнĕшĕн тата панăшăн айăплаççĕ.***

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн инспекци пуçлăхĕн çумĕ фирма директорне юридици вăйĕнчи тытăмсен тата уйрăм предпринимательсен пĕрлехи реестрĕнчи кăрартусене панă, çавăн пекех канашсемпе пулăшнă, фирма сотрудникĕсем граждансене, юридици вăйĕнчи тытăмсене налуксемпе çыхăннă пулăшу ĕçĕсем панă чухне хӳтлĕх кӳнĕ. Паллах, ахаль мар, çакăншăн пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕнче тата пуш уйăхĕнче коммерсантран 5-шер пин тенкĕ взятка илнĕ.

Правăна хирĕçле çак тĕслĕхе ШĔМĕн экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен пайĕпе пĕрле тăрă шыв çине кăларнă. Айăпланакансене тытса чарнă ĕнтĕ, вĕсем тĕлĕшпе килти арест мелĕпе усă курнă.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

## Камера ăçта?

***Полицирен 25 çулти хĕрарăм пулăшу ыйтнă: такам Шупашкарти Боголюбов урамĕнчи унăн хуралти çине вырнаçтарнă видеосăнав камерине вăрласа кайнă иккен.***

Юнашарах çак хĕрарăмăн çĕнĕ çурчĕн строительстви пырать – камерăна çавăнпа çакнă ĕнтĕ. Вăрăсенчен сыхланас тенĕ, анчах камера хăй преступлени объекчĕ пулса тăнă. Тĕрĕслев irttернĕ май полицейскисем хĕрарăмăн компьютерĕнчи диска илнĕ. Видеосăнав камерин ӳкерчĕкĕ шăпах компьютер çине тухать те – «вăрă» унта сăнланса юлнă. Хĕрарăм иккен! Лайăх курăнать: акă вăл хуралтă çумне пусма тăратать, ун тăрăх хăпарса видеокамерăна вăтăрса илет. Камера хуçи ăна палласа илнĕ: упăшкин пĕрремĕш арăмĕ!

Полици çав çынна тупнă. Шупашкартах пурăнакан 26 çулти хĕрарăм тунса тăман: вăл упăшки пулнăскере тавăрас шутпа çапла хăтланнă. Анчах камерăна вăрламан, ăна татса илнĕ хыççăн унтах юр ăшне ывăтса хăварнă-мĕн. Çапах пакунлисем техникăна тупайман, çавна май «вăрлани» статьяпах уголовлă ĕç пуçараççĕ-тĕр.

**К.АНТОНОВ.**

## 4 пуçтахăн пĕр шухăш

***Следстви комитечĕн Патăрьелти пайĕ Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕн çамрăкĕсем тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ, тишкерме суда панă. 23-29 çулсенчискерсене 4-шне те хĕрарăма мăшкăлланăшăн айăплаççĕ.***

Преступлени пĕлтĕрхи раштавăн 2-мĕшĕнче каçхине пулнă. Çамрăксем хăйсен ялĕн 32-ри арçынни патне килнĕ. Ушкăнри асли унпа хирĕçӳ пуçарнă, ăна темиçе хут çапнă. Çакăн хыççăн пуçтахсем арçыннăн мăшăрне /хут уйăрттарман, анчах пĕрле пурăнаççĕ/ пӳртрен йăтса тухнă, ирĕксĕрлесе машинăна лартнă та яла илсе кайнă. Унта вара черетпе пусмăрланă.

**Н.КОВАЛЕВ.**

## Депутатăн та...

***Тепĕр тесен депутат çын мар-им? Çук, ăна тӳрре кăларас шутпа çапла каламастпăр-ха... Хăтланăвĕ вара никама та чыс кӳмест. Пушшех – депутата.***

Следстви комитечĕн вырăнти органĕсем Çĕрпӳ районĕнчи Туçи ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕн 51 çулти депутачĕ пирки уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Ăна çынна хĕненĕшĕн айăплаççĕ. Арçыннăн тĕллевĕ вара йывăртарах статьяпа айăпламаллискерех пулнă. Юрать-ха, тӳрре кăларайман...

Пăтăрмах Лĕпсĕр ялĕнче пулнă. Депутат, ӳсĕрскер, çак ял хĕрарăмĕн килĕнче унăн нумаях пулмасть кăна ача çуратнă 22-ри тăванне çулăхнă. Вăл хăйне йĕркеллĕ тытма сĕнсен арçын ăна хĕнесе пĕтернĕ: питĕнчен, гитара грифĕпе кăкăрĕнчен çапнă, уринчен тапнă.

Уголовлă ĕçе тĕпчеççĕ.

**Н.СТЕПАНОВ.**

## «Пулăççене» тытнă

***Çак арçынсем Шупашкарти тӳлев терминалĕсенчен укçа вăрлани пирки информаци илсенех ЧР ШĔМĕн «К» пайĕн оперативникĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăннă – вĕсене Гагарин урамĕнчи пĕр лавкка патĕнче тытса чарнă.***

27-30 çулсенчи арçынсем Мускав облаçĕн регион номерĕллĕ «Шевроле» автомобильпе ларса кайма та хатĕрленнĕ ĕнтĕ – çук, ĕлкĕреймен. Вĕсен çумĕнче терминалсенчен укçа вăрламалли ятарлă купюрăсене, тĕрлĕ терминал чекĕсене тултарнă хутаççене тупнă.

«К» пай пуçлăхĕ Александр Смирнов пĕлтернĕ тăрăх – полицейскисен аллине Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче преступлени туса çӳрекен «гастролерсем» çакланнă пулас. Вĕсем Шупашкарта миçе терминала тустарма ĕлкĕрнĕ, ытти çĕрте мĕн хăтланнă – следстви пĕтĕмпех уçăмлатма тивĕç.

Аса илтерни вырăнлă: вăрăсен тĕнчинче «пулăççем» /терминалтан укçана кантра вĕçне çыхнă купюрăпа усă курса кăлараççĕ – акă мĕншĕн çакăн пек ят панă/ текен çакнашкал çынсене чăваш полицийĕ пирвайхи хут тытса чармасть. Кăрлачра кăна Тюмень çыннисене арестленĕччĕ. Вĕсем Чăваш Ен, Тутартсан, Чул хула облаçĕн территорийĕсенче «пулла» çӳренĕ. Шупашкарта кăна 100 пин тенкĕ ытла вăрланă.

**К.АНТИПОВ.**

**1.** Торги проводит администрация Цивильского района Чувашской Республики на основании постановления администрации Цивильского района от 04 марта 2014 года № 209.

**Предмет торгов: право на заключение договора аренды на земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 15 лет:**

**Лот 14** - площадью 52734 кв. м., с кадастровым номером 21:20:000000:12162, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Первостепановское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 1200 (одна тысяча двести) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 60 (шестьдесят) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 240 (двести сорок) рублей 00 копеек.
Земельный участок частично входит в зону "Зона с особыми условиями использования территории (охранная зона производственно-технологического комплекса - воздушная высоковольтная линия электропередач ВЛ-10 кВ п/ст Чурачики № 16 Вурманкасы Цивильского района)".

**Лот 15** - площадью 202162 кв. м., с кадастровым номером 21:20:140201:199, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Богатыревское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 4482 (четыре тысячи четыреста восемьдесят два) рубля 00 копеек.
Шаг аукциона 224 (двести двадцать четыре) рубля 10 копеек.
Сумма задатка 896 (восемьсот девяносто шесть) рублей 40 копеек.
Ограничения и обременения отсутствуют.

**Лот 16** - площадью 51906 кв. м., с кадастровым номером 21:20:230601:325, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Первостепановское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства.
Начальная (стартовая) цена 1200 (одна тысяча двести) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 60 (шестьдесят) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 240 (двести сорок) рублей 00 копеек.
Ограничения и обременения отсутствуют.

**Предмет торгов: право собственности на земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения:**

**Лот 17** - площадью 414 кв. м., с кадастровым номером 21:20:280201:301, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Богатыревское сельское поселение, для огородничества.
Начальная (стартовая) цена 1510 (одна тысяча пятьсот десять) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 75 (семьдесят пять) рублей 50 копеек.
Сумма задатка 302 (триста два) рубля 00 копеек.
Ограничения и обременения отсутствуют.

**Лот 18** - площадью 1500 кв. м., с кадастровым номером 21:20:060701:88, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Конарское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства.
Начальная (стартовая) цена 12500 (двенадцать тысяч пятьсот) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 625 (шестьсот двадцать пять) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 2500 (две тысячи пятьсот) рублей 00 копеек.
Ограничения и обременения отсутствуют.

**Лот 19** - площадью 1500 кв. м., с кадастровым номером 21:20:000000:12069, местоположением: Чувашская Республика, Цивильский район, Булдеевское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства.
Начальная (стартовая) цена 9700 (девять тысяч семьсот) рублей 00 копеек.
Шаг аукциона 485 (четыреста восемьдесят пять) рублей 00 копеек.
Сумма задатка 1940 (одна тысяча девятьсот сорок) рублей 00 копеек.
Ограничения и обременения отсутствуют.

**2.** Порядок определения победителя: победителем будет признан участник, предложивший максимальный размер цены предмета торгов.

**3.** Дата и время проведения аукциона: **21 апреля 2014 г. 10 час. 00 мин.**

**4.** Место проведения аукциона: Чувашская Республика, г. Цивильск, ул. Маяковского, д. 12, адрес электронной почты: zivil@cap.ru, номер контактного телефона 8(83545) 21-5-42.

**5. Условия проведения аукциона:** Шаг аукциона 5%, задаток - 20% от стартовой цены предмета торгов.
Способ продажи - аукцион.
Форма подачи предложений о цене открытая.
Критерий выявления победителя аукциона - максимальный размер цены предмета торгов.
Дата и время начала приема заявок 19 марта 2014 г. в 08 часов 00 минут.
Дата и время окончания приема заявок 18 апреля 2014 г. в 10 часов 00 минут.
Задаток должен быть перечислен не позднее 17 апреля 2014 г.
Прием заявок на участие в аукционе осуществляется по рабочим дням с 08.00 до 17.00 по адресу: г. Цивильск, ул. Маяковского, д. 12, каб. 315.
Справки по тел. (83545) 21-5-42 Интернет-сайт на котором размещена документация об аукционе: http://gov.cap.ru/SiteMap.aspx?gov_id=74&id=231925.
Определение участников аукциона состоится в администрации Цивильского района Чувашской Республики 18 апреля 2014 г. в 14 час. 00 мин.
Регистрация участников аукциона проводится 21 апреля 2014 г. с 09.20 до 09.45 по адресу: г. Цивильск, ул. Маяковского, д.12, каб. 315.

**Перечень документов, предоставляемых претендентами для участия в аукционе:**
1) заявка на участие в аукционе, установленного образца - в двух экземплярах;
2) платежный документ, с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение задатка;
3) копия сберкнижки (указать расчетный счет)
4) выписка из единого государственного реестра юридических лиц, нотариально заверенные копии учредительных документов - для юридических лиц, выписка из единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность, идентификационный номер налогоплательщика (ИНН) - для физических лиц.

Порядок возврата задатка:
- в случае отзыва заявки на участие в аукционе, до даты признания заявителя участником аукциона, задаток возвращается в течение 3 рабочих дней со дня поступления уведомления об отзыве заявки;
- в случае если аукцион не состоялся, задаток возвращается в течение 3 рабочих дней со дня подведения итогов аукциона
- в случае если заявитель аукцион не выиграл, задаток возвращается заявителю в течение 3 рабочих дней со дня подведения итогов аукциона.
Обязательство победителя аукциона - заключение договора аренды (купли-продажи) земельного участка в течение пяти дней со дня проведения аукциона.
Организатор аукциона имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 5 дней до его проведения.

**6.** По вопросу осмотра земельных участков на местности обращаться в администрацию сельского поселения на территории которого расположен земельный участок.

**7.** С формами заявок, договоров купли-продажи и аренды земельных участков, а также их содержанием, можно на сайте администрации Цивильского района в разделе "Аукционы", а также непосредственно при подаче заявок по адресу: Чувашская Республика, Цивильский район, г. Цивильск, ул. Маяковского, д.12, каб. 315.

**8.** Банковские реквизиты для перечисления задатка:
Реквизиты счета для оплаты задатка: Получатель Цивильский райфинотдел Доп.офис 8613/0300 Чувашского отделения № 8613, р/с № 40302810975180000001 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, БИК 049706609, ОКТМО 97641000, КПП 211501001, ИНН 2115903002, кор./сч.: 30101810300000000609, л/с 05153ЧП0012 Администрации Цивильского района, наименование платежа - залоговая сумма на участие в торгах 21.04.2014 г., Лот №__.

*Ыйту-хурав*

## Ашшĕне – больничнăй

**2004 çулта çуралнă хĕрĕм – сусăр. Иртнĕ çулхи çурла уйăхĕнче унăн сывлăхне тĕрĕслес тĕллевпе тата сиплев вăхăчĕ çитнипе госпитализацилерĕç. Манăн унпа пĕрле пулма тиврĕ. Анчах та больничнăй хутне тивĕçеймерĕм, мĕншĕн тесен асăннă документа сусăр ача йывăр чирлесен кăна параççĕ имĕш. Çакă тĕрĕс-и?**

**В.МИХАЙЛОВ.**

Çук, çакă саккунпа килĕшсе тăмасть. Чăн та, РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин 2011 çулхи çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчи хушăвĕпе çирĕплетнĕ 624-мĕш Йĕрке тăрăх вăхăтлăха ĕçлейменнин листокне сусăр ача йывăр чирлесе ӳкнĕ е вăраха кайнă амак вĕрĕлнĕ тапхăршăн кăна тӳлеççĕ. Анчах ку норма Раççей саккунĕсемпе килĕшсе тăмасть – ачана амбулаторире сипленĕ е унпа пĕрле стационарта пулнă мĕн пур вăхăтшăн ашшĕне е амăшне пособи памалла. Ку ыйтăва РФ Аслă судĕнче сӳтсе явнă. Унăн 2013 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнчи АКПИ13-178-мĕш йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн вăхăтлăх ĕçлейменнин хутне сусăр ача сывлăхне тĕрĕсленĕ чухне те, сиплев вăхăчĕ çитнипе госпитализацилесен те памалла.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.


## Саламлатпăр

*Юратнă, савнă мăшăр, атте, кукаçи, асатте – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Васликасси ялĕнче пурăнакан Иван Васильевич КУЗНЕЦОВ – паян, пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче, 75 çул тултарать. Сумлă юбилейпе чи хаклă çыннăмăра чăваш чĕлхинчи чи ăшă сăмахсемпе, юррисемпе саламлатпăр, тав тăватпăр.*

*Эсĕ пурришĕн – эпир савăнатпăр,*
*Эсĕ пуртан – телейпе сывлатпăр,*
*Эсĕ пуртан – ача пек кулатпăр,*
*Эсĕ пуртан – пирĕн çине сарă хĕвел*
*ăшăнрах пăхать.*
*Çирĕп сывлăх та вăрăм кун-çул сана.*
*Мăшăрĕ, ывăлĕ, кинĕ, хĕрĕсем,*
*кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.*


Администрация Кувакинского сельского поселения Алатырского района извещает о проведении общего собрания участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения из состава земель Кувакинского сельского поселения землепользования бывшего колхоза имени "8 марта".
1. Дата и время проведения общего собрания 10.00 часов 30 апреля 2014 года.
2. Адрес места проведения общего собрания: Чувашская Республика, Алатырский район, с. Ичиксы, ул. Новая Линия, д. 6-а.
3. Повестка дня общего собрания:
1. О предоставлении в аренду земельного участка, сельскохозяйственного назначения;
2. Об условиях договора аренды земельного участка;
3. О выборе лица, уполномоченного от имени участников долевой собственности без доверенности заключать договоры аренды данного земельного участка.
Для участия в общем собрании участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения при себе необходимо иметь:
1. Документ, удостоверяющий личность, либо документ, подтверждающий полномочия (доверенность и т.п.);
2. Документ, удостоверяющий право на земельную долю, земельный участок.

Администрация Кувакинского сельского поселения Алатырского района извещает о проведении общего собрания участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения из состава земель Кувакинского сельского поселения землепользования бывшего КСХП "Кувакинское"
1. Дата и время проведения общего собрания 15.00 часов 30 апреля 2014 года.
2. Адрес места проведения общего собрания: Чувашская Республика, Алатырский район, с. Бер.Майдан, ул. Кооперативная, д. 33.
3. Повестка дня общего собрания:
1. О предоставлении в аренду земельного участка, сельскохозяйственного назначения;
2. Об условиях договора аренды земельного участка;
3. О выборе лица, уполномоченного от имени участников долевой собственности без доверенности заключать договоры аренды данного земельного участка.
Для участия в общем собрании участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения при себе необходимо иметь:
1. Документ, удостоверяющий личность, либо документ, подтверждающий полномочия (доверенность и т.п.);
2. Документ, удостоверяющий право на земельную долю, земельный участок.

Администрация Кувакинского сельского поселения Алатырского района извещает о проведении общего собрания участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения из состава земель Кувакинского сельского поселения землепользования бывшего КСХП "Кувакинское"
1. Дата и время проведения общего собрания 13.00 часов 30 апреля 2014 года.
2. Адрес места проведения общего собрания: Чувашская Республика, Алатырский район, с. Кувакино, ул. Пролетарская, д. 18.
3. Повестка дня общего собрания:
1. О предоставлении в аренду земельного участка, сельскохозяйственного назначения;
2. Об условиях договора аренды земельного участка;
3. О выборе лица, уполномоченного от имени участников долевой собственности без доверенности заключать договоры аренды данного земельного участка.
Для участия в общем собрании участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения при себе необходимо иметь:
1. Документ, удостоверяющий личность, либо документ, подтверждающий полномочия (доверенность и т.п.);
2. Документ, удостоверяющий право на земельную долю, земельный участок.

Администрация Стемасского сельского поселения Алатырского района извещает о проведении общего собрания участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения из состава земель Стемасского сельского поселения.
1. Дата и время проведения общего собрания 14.00 часов 05 мая 2014 года.
2. Адрес места проведения общего собрания: Чувашская Республика, Алатырский район, с. Стемасы, ул. Ленина, д. 124.
3. Повестка дня общего собрания:
1. О предоставлении в аренду земельного участка, сельскохозяйственного назначения;
2. Об условиях договора аренды земельного участка;
3. О выборе лица, уполномоченного от имени участников долевой собственности без доверенности заключать договоры аренды данного земельного участка.
Для участия в общем собрании участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения при себе необходимо иметь:
1. Документ, удостоверяющий личность, либо документ, подтверждающий полномочия (доверенность и т.п.);
2. Документ, удостоверяющий право на земельную долю, земельный участок.

Администрация Междуреченского сельского поселения Алатырского района извещает о проведении общего собрания участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения из состава земель Междуреченского сельского поселения землепользования бывшего СПК им. "Кирова"
1. Дата и время проведения общего собрания 10.00 часов 05 мая 2014 года.
2. Адрес места проведения общего собрания: Чувашская Республика, Алатырский район, с. Междуречье, ул. 50 лет ЧАССР, д.14.
3. Повестка дня общего собрания:
1. О предоставлении в аренду земельного участка, сельскохозяйственного назначения;
2. Об условиях договора аренды земельного участка;
3. О выборе лица, уполномоченного от имени участников долевой собственности без доверенности заключать договоры аренды данного земельного участка.
Для участия в общем собрании участников долевой собственности и собственников земельных участков сельскохозяйственного назначения при себе необходимо иметь:
1. Документ, удостоверяющий личность, либо документ, подтверждающий полномочия (доверенность и т.п.);
2. Документ, удостоверяющий право на земельную долю, земельный участок.


## ПРОДАЮ

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**178.Цемент, гравмассу, песок.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федераци сыхăву, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ–54800, "Чăваш хĕрарăмĕ"–11515, "Хыпар"-шăматкун"–78353, "Сывлăх"–11524, "Çамрăксен хаçачĕ"–54804, "Кил-сурт, хушма хуçалăх"–54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.П.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7254. Заказ 961.